ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Июнь 27 ШăМАТКУН № 124 (9033)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Çĕнĕ заема сарасси пĕтĕм çĕршывра пысăк ăнăçлăхпа пулса пырать (1 стр.).

Республикăра çĕнĕ заем сарас ĕç мĕнле пыни çинчен (1 стр.).

Мирпе демократи ĕçĕшĕн (1 стр.).

А. Шишков.—Халăх ырлăхĕшĕн тăрăшасси—Коммунистсен партийĕн чи аслă законĕ (2 стр.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: В. Атлашева. — Хĕрарăмсем хушшинчи ĕçе вăйлатассишĕн (2 стр.).

А. Смирнов.—Колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн (3 стр.).

ЛАЙĂХ ÇУЛ-ЙĔРШЕН! Ĕçе хăвăртлатар (3 стр.).

Комбинатра йывăç типĕтес ĕçе йĕркелемелле (3 стр.).

Демократиллĕ Германи Республикинчи партипе правительство руководителĕсем ĕçсыннисен пухăвĕсенче тухса калаççĕ (4 стр.).

Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн актив пухăвĕсем (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

АГРОНОМ КАНАШĔ: М. Якимов.—Пĕтĕне пăхса ÿстересси (4 стр.).

Профсоюз организацийĕсен ĕçне лайăхлатмалла

Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана ăнăçлă тултарассишĕн пыракан аслă кĕрешÿре ĕçсынни массисен политикăлла тата творчествăлла активлăхĕ вĕçĕмсĕр ÿссе пырать. Ку вăл халĕ иртterекен политикăлла пысăк ĕçре те — государствăн çĕнĕ заемне сарас ĕçре питĕ уçăмлăн палăрать. Рабочисем, служащисем, инженерсемпе техниксем, ялхуçалăх ĕçченĕсем—мĕнпур ĕçсыннисем çĕнĕ заема тулли кăмăлпа çырăнса илни совет çыннисем коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçленине кăтартса парать. Промышленноçра, транспортра, ялхуçалăхĕнче çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвакансен, стахановецсемпе новаторсен йышĕ куллен-кун нумайланать.

Совет çыннисен кĕрешÿри хастарлăхĕпе пултарулăхне ÿстерес ĕçре профсоюзсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Совет профсоюзĕсем — чи массăллă организаци. Вĕсем рабочи класпа мĕнпур ĕçсыннисене государство строительствине хутшăнтаракан пысăк вăй пулса тăраççĕ. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ хуçалăхпа культура строительствинче профсоюзсен рольне малалла ÿстерсе пымалли майсене кăтартса пачĕ.

Юлашки вăхăтра, чылай министерствăсене пĕрлештерсе пысăклатнă май, профессилле союзсем те пĕрлешрĕç. Çапла тунипе профсоюз органĕсемшĕн вырăнти организацисене ертсе пырас ĕçе вăйлатма, рабочисемпе служащисен ыйтăвĕсене тата туллинрех тивĕçтерме лайăх майсем пулса тăчĕç.

Профсоюзсен массăсем хушшинчи ĕç меслечĕ лайăхланса, çĕнелсе пырать. Ĕçсыннисене партипе правительство решенийĕсене пурнăçлама организацилес, рабочисемпе служащисен пурнăçпа ĕçлă условийĕсене лайăхлатас, массăсене воспитани парассине йĕркелес ĕçре пирĕн республикăри профорганизацисем те паха опыт пухрĕç.

Шупашкарти пир-авăр фабрикинчи профсоюз организацийĕ ĕç тухăçлăхĕпе продукци пахалăхне ÿстерес тесе, чылай ĕçсем туса иртterчĕ. Профсоюз организацийĕ политикăлла-массăлла ĕçе вăйлатнипе пĕрлех, производство новаторĕсен опытне сарать, социализмла ăмăртура çитĕнÿсем тумалли меслетсемпе мĕнпур рабочисене паллаштарать. Фабрикăра стахановла шкул, производство техникине вĕренмелли курссем ĕçлеççĕ. Фабком пуçарăвĕпе кунта техникăлла кабинет йĕркеленĕ. Производство техникине, малта пыракан опыта вĕренес ĕçе рабочисен пысăк пайне хутшăнтарнă.

Вырăнти промышленность работникĕсен профсоюзĕн ытти хăшпĕр организацийĕсем те рабочисен социализмла ăмăртăвне чылай вăйлатрĕç. Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрика кăçалхи пĕрремĕш çур çулта тумалли ĕçсен планне июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Çак ÿсĕмсене тăвас ĕçре профсоюз организацийĕ хăйĕн пуçарулăхĕпе пултарулăхне аван кăтартрĕ.

Анчах та, пĕтĕмĕшпе илсен, республикăри профсоюз организацийĕсем массăлла ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ, ĕç культурине ÿстерес, социализмла ăмăртăва вăйлатас, малта пыракан опыта сарас енĕпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Куславккари çуртсем тăвакан, Улатăрти пăравуссем юсакан заводсенчи, Буинскри вăрманпромхозри тата ытти чылай предприятисенчи профсоюз организацийĕсем хăйсен пуçарулăхне сахал палăртаççĕ. Ку предприятисенче производство техникине вĕренес, стахановецсен меслетне сарас ĕçе хаклăмаççĕ, рабочисем валли политикăлла тата производствăлла темăсем тăрăх лекцисемпе докладсем сайра хутра кăна иртtereççĕ. Профсоюз организацийĕсен культурăпа çутĕç учрежденийĕсем — клубсемпе хĕрлĕ кĕтессем тата библиотекăсем начар ĕçлеççĕ. Профсоюз обкомĕсем çакăн пек йĕркесĕрлĕхсемпе килĕшсе пурăнаççĕ.

Чылай фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнсенчи комитетсен яланхи комиссийĕсем хут çинче кăна шутланса тăраççĕ Профсоюз обкомĕсем ялан хи комиссисен ĕçĕсене йĕркелес енĕпе вырăнти комитетсене ытла та сахал пулăшаççĕ. Уйрăм обкомсем пĕчĕк çитĕнÿсем тунипех шавлăн мухтанма пăхаççĕ.

Фабрикăсемпе заводсенчи, учрежденисемпе организацисенчи комитетсене, профсоюз обкомĕсене облпрофсовет çителĕксĕр пулăшать. Облпрофсоветăн çак кунсенче пулса иртнĕ VIII-мĕш пленумĕ облпрофсоветпа профсоюз обкомĕсен пысăк çитменлĕхĕсене тĕплĕн кăтартса пачĕ. Пленум йышăннă решенисене чыслăн пурнăçлани профсоюз организацийĕсен ĕçне тĕпренех лайăхлатма пулăшмалла.

Профсоюз организацийĕсенчен чылайăшĕ ĕçсыннисене политикăлла воспитани парас ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ. Уйрăмах культура работникĕсен, потребкоопераци, государство суту-илĕвĕн работникĕсен профсоюз обкомĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Ĕçсыннисене государство интересĕсене ытларах хаклама, ĕç дисциплинине çирĕплетме воспитани парасси — профсоюз организацийĕсен хисеплĕ те чыслă тивĕçĕ. Профсоюз работникĕсен çакна яланах асра тытас пулать.

Рабочисемпе служащисене воспитани парас, вĕсене партипе правительствăн кăтартăвĕсене пурнăçлама мобилизацилес ĕçре пĕрлехи пухусемпе производствăлла канашлусем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Профсоюз массисен активлăхне ÿстерес тени рабочисемпе служащисен шухăш-кăмăлĕсене тĕплĕн шута илме кирлине, аялтан килекен критикăпа самокритикăна сарса пыма, çитменлĕхсене хăюллăн палăртма кирлине пĕлтерет. Профсоюз организацийĕсене ытларах çирĕплетес тесен, шалти демократие пур майсемпе те сарса пыни кирлĕ. Анчах та чылай предприятисемпе учрежденисенче пĕрлехи пухусемпе производствăлла канашлусене сайра хутра кăна, хăшпĕр чухне ячĕшĕн кăна иртtereççĕ. Профсоюз организацийĕсен руководителĕсем мĕнпур ĕçсене аппаратри работниксен вăйĕпе тума тăрăшаççĕ, массăпа актив çине таянса ĕçлемеççĕ.

Халăх ырлăхĕшĕн, унăн материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерсе пырассишĕн тимлĕн тăрăшасси Коммунистсен партийĕпе Совет правительствишĕн тĕп закон пулса тăрать. Профсоюз организацийĕсен мĕнпур ĕçе çав тĕллевпе туса пымалла. Хальхи вăхăтра ĕçсыннисен çуллахи канăвне лайăхрах йĕркелессишĕн уйрăмах тимлĕн тăрăшмалла.

ВЦСПС президиумĕ, Совет правительстви çĕнĕ заем кăларасси çинчен йышăннă решение ырласа, профсоюз организацийĕсене çакăн пек кăтартса пачĕ: «Профессилле Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕн Президиумĕ профсоюз организацийĕсене СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема (1953 çулхи кăларăм) рабочисем, служащисемпе интеллигенци, мĕнпур ĕçсыннисем хушшинче сарас ĕçе активлă хутшăнма хушать. Профсоюз организацийĕсен çĕнĕ заем пĕлтерĕшĕ çинчен массăсене ăнлантарса парас ĕçе анлăн сарса ямалла тата ĕçсыннисен творчествăлла вăй-хăватне коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн мирлĕ ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тумалли çулпа яма тăрăшмалла».

Совет заемĕ пирĕн çĕршыври мирлĕ строительствăра çĕнĕ ÿсĕмсем тума, Тăван çĕршыв вăй-хăватне тĕреклетме пулăшать. Вăл ĕçсыннисен материальнăй пурнăçне тата культурăлла шайне малалла ÿстерме май парать. Профсоюз организацийĕсен заем çырăнас ĕçе мĕнпур рабочисемпе служащисене активлă хутшăнма пулăшас пулать.

Профсоюз организацийĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн куллен тăрăшасси — парторганизацисен тивĕçĕ. Анчах та партин хăшпĕр райкомĕсемпе хула комитечĕсем, сăмахран, КПСС Шупашкар, Улатăр, Элĕк, Калинино, Муркаш райкомĕсем профсоюз организацийĕсене ертсе пырас ĕçпе ытла та сахал интересленеççĕ. Парти комитечĕсемпе пуçламăш парторганизацисен профсоюз организацийĕсен ĕçне вăйлатассишĕн ытларах тăрăшмалла, ертсе пыракан кадрсене ытларах воспитани парса, вĕсен ĕçри ответлăхне ÿстерме тăрăшмалла.

Çĕнĕ заема сарасси пĕтĕм çĕршывра пысăк ăнăçлăхпа пулса пырать

Шупашкарти предприятисенче

Шупашкар хулинчи ĕçсыннисем çĕнĕ заема пысăк активлăхпа çырăнса илеççĕ. Хăйсем перекетленĕ укça-тенкĕне государствăна кивçен парса, вĕсем социализмла Тăван çĕршыва тата Ленин—Сталин партине парăнса ĕçленине, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн хастарлă кĕрешнине кăтартса параççĕ.

Пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекенсем çĕнĕ заем кăларасси çинчен йышăннă постановление радио тăрăх пĕлтерсенех митинга пухăннă. Çип арлакан цехри мастер помощникĕ Выговорова юлташ митингра çапла каланă:

— Государство совет çыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн куллен тăрăшать, çĕнĕ фабрикăсемпе заводсем, шкулсемпе больницăсем, санаторисем тума, пионер лагерĕсем, ача яслисем уçма çулленех укça-тенкĕ нумай расходлать. Эпир пурте телейлĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăнатпăр. Партипе правительство пирĕншĕн куллен тăрăшнăшăн савăнса, эпĕ хамăн икĕ эрнери ĕç укçи чухлĕ çĕнĕ заем илме çырăнатăп.

Пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекен рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем заем илме пĕр çын пек пулса çырăннă.

Пир-авăр комбинат строительствинчи участоксенче те заем кăларни çинчен пĕлтерсенех нумай çынлă митингсем пулса иртнĕ. Кунта ĕçлекенсем пĕр талăк хушшинче заем илме пурте çырăннă.

Пир-авăр комбинат строительствинче ĕçлекенсем пĕр талăк хушшинче 341.000 тенкĕлĕх çĕнĕ заем илме çырăннă.

Çĕнĕ заем илме çырăнасси Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводра та ăнăçлă иртет. Кунта ĕçлекенсенчен 98 проценчĕ ытла заем илме çырăннă.

Государствăн çĕнĕ заемне çырăнасси çавăн пекех лента тĕртекен фабрикăра, чăлха фабрикинче, Чăваш АССР Сывлăх министерствинче тата ытти предприятисемпе учрежденисенче те ăнăçлă иртет.

Июнĕн 26-мĕшĕ тĕлне Шупашкарти ĕçсыннисем хушшинче çĕнĕ заем 7 миллион та 863 пин тенкĕлĕх сарнă.

Çĕнĕ заем сарасси ăнăçлă пырать.

* * *

Атăл леш енчи торф предприятийĕнче хĕрÿллĕ ĕç вĕресе тăрать. Совет правительстви çĕнĕ заем кăларасси çинчен йышăннă решени коллективăн политикăлла активлăхĕпе ĕçри хастарлăхне тата ытларах ÿстерчĕ.

— Партипе правительство пирĕншĕн тăван атте пек тăрăшаççĕ. Хăватлă машинăсем пирĕн ĕçе çăмăллатаççĕ тата перекетлеççĕ. Ĕçлеме те пурăнма та лайăх. Çĕнĕ заем Тăван çĕршыв экономикине хăвăртрах вăйлатма, ĕçсыннисен пурнăçне аванлатма пулăшĕ. Совет çыннисен ырлăхĕшĕн тата тухăçлăрах ĕçлĕпĕр, — тенĕ заем çырăнса илнĕ чухне Людмила Алексеева бригадир. Çавăн пек патриотла калакансем нумай. Рабочисем, инженерсемпе техниксем, служащисем, пурте пĕр çын пек пулса, заем çырăнса илнĕ.

Коллективăн патриотизмне çакăнтан та уççăн курма пулать. Июнĕн 24-мĕшĕнче иккĕмĕш сменăра хула Совечĕн депутачĕ Людмила Алексеева юлташ тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Анастасия Лукина юлташ ертсе пыракан бригадăсем нормăран иртterсе 10-шар пин ытла торф кирпĕчĕ кăларнă.

Ĕçсыннисен патриотла çĕкленĕвĕ

Районти ĕçсыннисем, Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăхпа пĕрле, правительство çĕнĕ заем кăларма йышăннă постановление пысăк хавхаланупа йышăнса илчĕç. Заем кăларнă ятпа пур предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче савăнăçлă митингсем пулса иртрĕç. Государствăн çĕнĕ заемне çырăнса илес ĕçре ĕçсыннисем политикăлла пысăк активлăх кăтартаççĕ. Июнĕн 25-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле мĕнпур рабочисемпе служащисем çĕнĕ заема çырăнса илнĕ. Вĕсем нумайăшĕ хăйсен икĕ эрнери ĕç укçи чухлĕ заем çырăнчĕç.

Государствăн çĕнĕ заемне сарасси колхозниксем хушшинче пысăк хаваслăхпа пулса иртрĕ. Ял çыннисем хушшинче 370 пин тенкĕлĕх заем сарнă. Çак шутран 285 пин тенкине çийĕнчех перекет кассине хывнă. Ворошилов ячĕпе тăракан пĕрлешсе пысăкланнă колхоз членĕсем правительство çĕнĕ заем кăларни çинчен пĕлтернине хапăл туса йышăнчĕç. Кунти уй-хир бригадисенче митингсем пулса иртрĕç. Колхозниксем хăйсен кĕске сăмахĕсенче государство заемĕсен халăх хуçалăхĕнчи пĕлтерĕшĕ, Совет Союзĕ коммунизм çулĕпе малалла пыни, ĕçсыннисен пурнăçĕ лайăхланни çинчен каларĕç. Колхозниксен патриотла çĕкленĕвĕ пысăк. Вĕсем, пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса, заем çырăнса илнипе пĕрлех ялхуçалăхĕнче те çĕнĕ ÿсĕмсем тума обязательствăсем илеççĕ. Артель членĕсем Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăхĕ умне лартнă задачăсене пурнăçлассине хăйсен ĕçĕнче тĕп вырăна хураççĕ.

— Совет саманинче пирĕн пурнăç тĕпрен улшăнчĕ,— терĕ Портнова колхозница.—Тĕнчери халăхсен пысăк шанчăкĕ— Совет Союзĕ коммунизм патне малалла пырать. Колхозниксем пуян пурăнаççĕ. Мĕн тери пысăк телей! Çĕнĕ предприятисемпе гидростанцисем тума пулăшас тесе, эпĕ перекетленĕ укçана государствăна кивçен паратăп. Пирĕн юратнă çĕршыв татах тĕреклентĕр, çирĕплентĕр. Пирĕн хуласемпе ялсем малашне те ÿссе чечекленччĕр.

Колхозниксем пĕрин хыççăн тепри заем çырăнса илеççĕ, нумайăшĕ укçине çийĕнчех тÿлеççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем пурĕ 35 пин тенкĕлĕх заем çырăнса, укçине çийĕнчех тÿлерĕç.

«Марс» колхозра та çак кунсенче пысăк савăнăç. Бригадăсемпе выльăх-чĕрлĕх фермисенче, ялти культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче—пур çĕрте те ял ĕçченĕсем правительство постановленийĕ çинчен ăшшăн калаçаççĕ. Кашниех хăйĕн шухăш-кăмăлне палăртма тăрăшать, савăнăçлă пурнăç çинчен сăмахлать. Заем кăларнă ятпа пулнă митингра Каббазов колхозник сăмах илчĕ.

— Çĕнĕ заем халăх хуçалăхне малалла аталантарма каять,— терĕ вăл,— пирĕн çĕршывра строительство ĕçĕ пысăккăн сарăлчĕ. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн куллен тăрăшаççĕ. Эпир, колхозниксем, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçлассишĕн малашне те ырми-канми ĕçлĕпĕр. Вăл çĕнĕ заема 100 тенкĕлĕх çырăнчĕ, укçине çавăнтах тÿлесе татрĕ. Кафуров, Сабируллин юлташсем те 150—200-шер тенкĕлĕх заем çырăнса, укçине çийĕнчех пачĕç. Колхоз членĕсем икĕ кун хушшинче 13 пин тенкĕлĕх заем çырăнса илчĕç, укçине тÿлесе татрĕç.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли çĕнĕ заем кăларни çинчен пĕлтернĕ хыпар «Хунав» колхозра хăвăрт сарăлчĕ. Пуçламăш парторганизаци секретарĕн заместителĕ Смирнова юлташ, колхозниксен митингне уçса, çапла каларĕ:

— Кăçал кăларнă заем тăрăх пухăннă укçа пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана пурнăçлас ĕçе каять. Пирĕн колхозниксем Совет правительствин постановленине чĕререн ырлаççĕ, ĕçпе те, укçа-тенкĕпе те Тăван çĕршыв тĕрекне çирĕплетме пулăшаççĕ. Пурте пĕр çын пек пулса çĕнĕ заема çырăнса илер, ялхуçалăхĕнче çĕнĕ ÿсĕмсем тăвар!

— Эпĕ государствăна кивçен паракан укçа коммунизм обществи тунă çĕре кайтăр,— терĕ 70 çулхи колхозник Перцев юлташ. Вăл çĕнĕ заема 75 тенкĕлĕх çырăнчĕ, укçине çийĕнчех тÿлесе татрĕ. Июнĕн 25-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле пур колхозниксем те заем çырăнма ĕлкĕрчĕç.

Районти механизаторсем çĕнĕ заема 20 пин тенкĕлĕх çырăнчĕç. Çавăн пекех Чапаев ячĕпе, М. Горький ячĕпе, Дзержинский ячĕпе тăракан, «Вперед», «Авангард» тата ытти колхозсенче те заем çырăнса илесси ăнăçлă пулса иртрĕ.

КПСС райкомĕ çак кунсенче ĕçсыннисем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе анлăн туса пырать. Пуçламăш парторганизацисене пулăшма район центрĕнчен ялсене 40 докладчик кайнă. Вĕсем пирĕн государствăн заемĕсем, Совет Союзĕнчи халăх хуçалăхĕ пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра хăватлăн аталанни, ĕçсыннисен пурнăçĕ лайăхланни çинчен, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх лекцисемпе докладсем иртtereççĕ. Кунсăр пуçне, районта массăлла-ăнлантару ĕçне 800 агитатор туса пырать. Агитаторсем калаçусенче вырăнти тĕслĕхсемпе анлăн усă кураççĕ, районти колхозсем хуçалăхпа организаци тĕлĕшĕнчен çуллен-çул тĕреклене пыни çинчен каласа параççĕ.

Халĕ районти парти организацийĕ тата пĕтĕм общественность хресченсем хушшинче сарнă заем укçине çывăх вăхăтрах пухса пĕтерессишĕн тимлĕн ĕçлеççĕ.

Г. АЛЕКСЕЕВ,
КПСС Елчĕк райкомĕн секретарĕ.

Мирлĕ строительство заемĕ

КИЕВ, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Андреев ячĕпе тăракан пăравуссен деповĕнчи механически цех. Рабочисем правительство çĕнĕ заем кăларма йышăннă постановление диктор вуласа панине тимлĕн итлеççĕ.

Радио калама чарăнсанах депо цехĕсенче митинг пулса иртнĕ. Токарь-стахановец Песковой юлташ сăмах илет.

— Эпир, чугун çул работникĕсем, — тет вăл,—çĕнĕ заем кăлармалла тунине хĕрÿллĕн саламлатпăр. Пирĕн заемсем мирлĕ строительство заемĕсем. Заем укçи çĕнĕ суртсем, пирĕн ачасем валли шкулсем, чаплă санаторисем, культура двореçĕсем, институтсем тума каять.

Техник Терещук, машинист-инструктор Лубман юлташсем юратнă Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн ĕçлеме, социализмла экономикăна тĕреклетме хатĕр тăни çинчен каласçĕ.

Митинг хупăнать. Машинистсем, вĕсен помощникĕсем, рабочисем, инженерсем, техниксем, служащисем çĕнĕ заема çырăнма пуçлаççĕ.

«Красный экскаватор» заводра пулса иртнĕ пухура рабочи Назаров юлташ çапла каланă:

— Эпĕ «Красный экскаватор» заводра çирĕм çул ытла ĕçлетĕп. Çак тапхăр хушшинче манăн куç умĕнчех пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Цехсем палламалла мар улшăнчĕç. Кивĕ техникăна çĕнĕ техникăпа улăштарнă. Тимĕрçĕ ĕçĕ те улшăнчĕ. Вăл лайăх механизмпа ĕçлеме вĕренсе çитрĕ. Эпир кучухнехи техника никĕсĕ çинче социализмла производство вĕçĕмсĕр ÿссе пынине куратпăр. Пирĕн çĕршывра çынсен тăрăшасси Коммунистсен партийĕн аслă законĕ пулса тăчĕ. Акă мĕншĕн эпĕ çĕнĕ заема хапăл туса çыранатăп.

Трибуна умĕнче мастер Страховский юлташ.

— СССР Министрĕсен Совечĕ, — тет вăл, — халăх хуçалăхĕ хăватлăн ÿссе аталаннине, социализмла предприятисен тупăшĕ ÿснине шута илсе, кăçал заема иртнĕ çулхинчен икĕ хут сахалтарах кăларма йышăнчĕ. Çакă вăл пирĕн экономика тĕреклене пынине, хуçалăхăн социализмла системи капитализмла системăран малта тăнине пуринчен те лайăхрах кăтартакан тĕслĕх пулса тăрать.

Çĕнĕ заем кăларнă ятпа митингсем «Большевик», «Транссигнал» тата Киеври ытти предприятисенче те пулса иртнĕ. Рабочисемпе служащисем çĕнĕ заем кăларнине пур çĕрте те ырласа йышăнаççĕ.

Атăл çинче ĕçлекенсен сăмахĕ

ГОРЬКИЙ, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Заем кăларни çинчен Мускавран радио тăрăх пĕлтернĕ вăхăтра «Сталинская Конституция» теплоход Горький пристанĕнче тăнă. Теплоход команди правительство çĕнĕ заем кăлармалла тунине пĕр шухăшлă пулса ырланă. Вĕсем çавăнтах заем çырăнса илме тытăннă.

«Спартак» пăрахут Астраханьрен Горькие килме тухнă. Пăрахут çинчен радиопа пĕлтернĕ тăрăх, çĕнĕ заема пĕтĕм экипаж хаваслăн çырăннă.

Рязанов матрос çапла каланă:

— Эпĕ тахçантанпах Атăл çинче ĕçлетĕп. Совет влаçĕ пуçланнăранпа кунта пурте улшăнчĕ. Ĕлĕкхи вăхăтра бурлаксем тертленнĕ вырăнсенче халĕ пысăк складсем, дебаркадерсем, крансем, транспортерсем, ытти машинăсем тăраççĕ. Грузчиксемпе матроссен ĕçĕ тĕпрен çăмăлланчĕ. Атăл сыранĕсенче çĕнĕ хуласемпе поселоксем ÿссе çитĕнеççĕ. Акă мĕншĕн эпĕ тата манăн ывăлăм (вăл та çак пăрахут çинчех матрос пулса ĕçлет), пĕтĕм команда çĕнĕ заема хаваслăн çырăнса илетпĕр.

Халăх ырлăхĕшĕн

СТАВРОПОЛЬ, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Крайри колхозсен уй-хир станĕсенче çĕнĕ заем кăларнă ятпа пухусем пулса иртрĕç. Константиновка МТС-ĕнчи трактор бригадин бригадирĕ Нестеренко юлташ çапла каланă:

— Государствăна кивçен паракан укçа хамăрăн юратнă Тăван çĕршывăн хăватне тĕреклетме, халăх пурнăçне лайăхлатма кайнине эпир кашниех пĕлсе тăратпăр. Ставрополь тăрăхĕнчи колхозсен уй-хирĕсенче хăватлă техника ĕçлет. Коммунистсен партийĕ, Совет правительстви куллен пулăшнипе пирĕн МТС, ытти станцисем пекех, кăçал мĕнпур уй-хир ĕçĕсене комплексла майпа механизацилесе çитерет. Эпĕ хамăн икĕ эрнери ĕç укçине государствăна кивçен паратăп.

Çĕнĕ заема çырăнса илесси колхозсенче ăнăçлă иртет.

Тăван çĕршыв вăй-хăватне ÿстерме

ÇĔМĔРЛЕ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем СССР Министрĕсен Совечĕ çĕнĕ заем кăларасси çинчен постановлени йышăнни çинчен илтсенех митинга йышлăн пухăнчĕç.

— Пирĕн Тăван çĕршыв çултан-çул вăйланса, тĕрекленсе пырать. Правительство кăларнă çĕнĕ заем юратнă Тăван çĕршыв вăй-хăватне тата ытларах тĕреклетме, совет çыннисен пурнăçне лайăхлатма, колхозсене малалла аталантарма пулăшĕ, — терĕ район Совечĕн депутачĕ Николаев юлташ.

Колхозниксем патриотла пысăк çĕкленупе çĕнĕ заем çырăнма тытăнчĕç. Кириллов, Спиридонова, Мочтайкин колхозниксем заема 100-шер тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тÿлерĕç. Кĕске вăхăт хушшинче ялти колхозниксем пурте тенĕ пекех çĕнĕ заема çырăнса илчĕç.

А. АФАНАСЬЕВ.

МИРПЕ ДЕМОКРАТИ ĔÇĔШĔН

Июнĕн 25-мĕшĕнче каçхине Мускаври Щербаков ячĕпе тăракан пир-авăр комбинатĕнче митинг пулса иртнĕ. Митинга 3.000 çын ытла пухăннă. Митинга фабком председателĕ В. С. Козлова уçнă.

Трибуна умĕнче нумай станокпа ĕçлекен паллă ткачиха Таисия Шеина. Вăл кăçал планран иртterсе 1.500 метр пурçăн пир тĕртсе панă. Шеина юлташ çапла калать:

— Манăн, комбинатри çамрăк работницăн, çапла калас килет: манăн сассăма Демократиллĕ Германи Республикинчи ĕç çамрăкĕсем илччĕр. Берлинăн Америка секторĕнчи провокаторсем Германи халăхĕн телейĕ çине тапăнма, унăн демократиллĕ прависене туртса илме шутланă. Берлинри провокаци çĕр чăмăрĕ çинчи миллионшар çынсене тарăхтарса ячĕ. Эпир ют çĕршывсене тара кĕрĕшнĕ авантюристсен киревсĕр ĕçĕсене питлетпĕр.

Манăн нимĕç çамрăкĕсене çапла калас килет: хăвăрăн демократилле çамрăк республикăна куç шăрçине сыхланă пек сыхлăр! Сыхă пулăр! Провокаторсем çывăрмаççĕ.

Провокаторсен ĕçĕсене сивлесе цехри смена мастерĕ А. А. Тюлюлюева сăмах калать.—

— Берлинăн демократиллĕ секторĕнче организациленĕ йĕркесĕрлĕхе хĕвеланăç державăсенчи реакциллĕ ушкăнсем малтанах тĕплĕн хатĕрлени халĕ пур енчен те паллă пулса тăчĕ ĕнтĕ,— тенĕ вăл.— Çав йĕркесĕрлĕхсене Хĕвеланăç Германири монополистсем, мир ĕçне путлантарса лартма тăрăшакан мĕнпур ирсĕрсем хатĕрленĕ. США конгресĕ Совет Союзне тата демократи лагерьне, кĕрекен мĕнпур çĕршывсене сиен кÿрес тĕллевпе сăтăрла ĕçсем, диверси, шпионаж тума 100 миллион доллар укçа уйăрса панă.

Миллионшар çынсем миршĕн тăраççĕ. Халăха ултала пăхакан провокаторсене ырă шухăшлă çынсем тарăхса сивлеççĕ.

Митингра пулнисем пурте пĕр саслă пулса Бранденбург хулинчи пир-авăр фабрикинче ĕçлекен рабочисем патне яма резолюци йышăнаççĕ.

— Эпир сире, хамăрăн тусăмăрсене, чĕнсе калатпăр,— тесе çыраççĕ комбинатра ĕçлекен рабочисем Бранденбург хулинчи пир-авăр фабрикинче ĕçлекен рабочисем патне яма йышăннă резолюцире.— Эпир сире хăвăрăн ретсенчи пĕрлĕхе тата ытларах тĕреклетме, Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕ тавра тачăрах пĕтĕçме чĕнетпĕр.

Эпир çакна шанса тăратпăр: Германи халăхĕ хăйĕн демократиллĕ республикине тĕреклетессишĕн тата активлăрах кĕрешĕ, мирпе демократи ĕçне пĕр шухăшлă пулса хÿтĕлесе хăварĕ.

* * *

Ют çĕршывсене тара кĕрĕшнĕ провокаторсем июнĕн 17-мĕшĕнче Берлинра организациленĕ авантюрăна хирĕçлесе митингсем, çавăн пекех Мускаври 1-мĕш АТЭ заводĕнче, «Динамо», Киров ячĕпе тăракан, «Красный богатырь» заводсенче, Калинин ячĕпе, Клара Цеткин ячĕпе тăракан фабрикăсенче тата ытти предприятисенче те пулса иртнĕ.

Митинга пухăннисем фашистла провокаторсене чĕререн тарăхса сивленĕ. Хăйсем йышăннă решенисенче совет çыннисем çакна çирĕппĕн шанса калаççĕ: нимĕç халăхĕ хăйне хĕн-хур кăтартма пăхакан ирсĕрсем хыççăн каймĕ. Нимĕç халăхĕ мир, демократи, пĕрлĕх çулĕпе малалла кайĕ. (ТАСС).

Республикăра çĕнĕ заем сарас ĕç мĕнле пыни çинчен

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1953 çулхи кăларăм) ăнăçлăн саралать. Июнĕн 25-мĕшĕ иртнĕ тĕле пирĕн республикăри ĕçсыннисем çĕнĕ заема 33 миллион тенкĕлĕхе яхăн çырăнса илнĕ. Заем çырăнса илесси малалла пырать.

Шупашкар, Канаш, Улатăр хулисенче, çавăн пекех Елчĕк, Чкаловски, Шăхасан, Çĕмĕрле, Муркаш, Ишлей, Элĕк, Первомайски тата Вăрмар районĕсенче рабочисемпе служащисем хушшинче заем сарассине уйрăмах лайăх организациленĕ. Елчĕк, Чкаловски, Шупашкар, Улатăр, Муркаш районĕсенче хресченсем хушшинче заем сарас ĕç ăнăçлă пырать.

Республикăри хресченсем заем укçи пĕр миллион тенкĕ ытла тÿлесе татнă.

Елчĕк районĕнче хресченсем заем укçи тÿлесси ăнăçлă пулса пырать. Кунта июнĕн 25-мĕшĕнче каç пулнă тĕле 285 пин тенкĕ заем укçи пухнă, ку вăл заем çырăнса илнĕ суммăн 77 проценчĕ пулать. Чкаловски, Шупашкар тата Комсомольски районĕсенче те заем укçи пухас ĕç ăнăçлă пырать.

Красноармейски, Тăвай, Вăрнар, Элĕк, Куславкка, Турачăк тата Çĕмĕрле районĕсенче заем сарас ĕç ăнăçлă пулса пырать пулин те, хресченсенчен заем укçи пухасси юхса пырать.

Чăваш АССР Финанс министрĕ А. СОМОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Хĕрарăмсем хушшинчи ĕçе вăйлатассишĕн

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ хĕрарăмсем хушшинчи ĕçлессине пысăк вырăна хурать. Пирĕн парти совет хĕрарăмĕсене хуçалăхпа общество-политикăлла пурнăçа активлăн хутшăнтарма тата хĕрарăмсен политикăлла-культурăлла ӳсĕмне анлăлатса ыйма тăрăшать.

Шăмăршă районĕнчи хĕрарăмсем те, совет çĕршывĕнчи мĕнпур хĕрарăмсем пекех, коммунизмла общество тăвас ĕçе активлă хутшăнаççĕ. Химлесхозăн Кив Чукал участокĕнче сахăр кăларнă çĕрте ĕçлекен чăваш хĕрачи Е. Заказова юлташ хăйĕн заданийĕсене 200-шер процент ирттерсе тултарать. А. Чамеевăпа В. Головина юлташсем те Е. Заказова юлташ мĕслечĕпе усă курса, хăйсен кулленхи ĕç нормисене 180—200-шер процент таран тултараççĕ.

Шăмăршă вăрманпромхозĕнче Е. Угалнина тата С. Саитова юлташсем нумайранпа ĕçлеççĕ. Вĕсем вăрман касса хатĕрлес тĕлĕшпе кулленхи ĕç нормисене 150—180-шар процент тултараççĕ. Вĕсене вăрманпромхоз администрацийĕн тата профсоюз организацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

1953 çулта С. Саитова юлташ рабочирен мастер помощникĕ пулса ĕçлеме тытăннă. Иртнĕ суйлавра ĕçсыннисем ăна Баскак ял Совечĕн депутатне суйланă. Хальхи вăхăтра С. Саитова юлташ хăйĕн пĕлӳлĕхне хăпартас тĕлĕшпе курсра вĕренет.

Колхозсенчи хĕрарăмсем пысăк тухăçлă тырпулшăн, обществăлла выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Хĕрарăмсем колхозра пысăк вăй пулса тăчĕç. Колхоз производствин пур отраслĕсенче те хĕрарăмсем ăнăçлă ĕçлеççĕ. Чылай хĕрарăмсем уй-хир бригадисене, фермăсене, пахча çимĕç акса тăвакан звеносене ертсе пыраççĕ. Уйрăмах фермăсенче хĕрарăмсем ытларах ĕçлеççĕ. Районти колхозсенче 57 хĕрарăм доярккăсем, 29 çын пăру пăхакансем, 57 çын сысна пăхакансем, 7 çын конюхсем, 30 çын чăх-чĕп пăхакансем пулса ĕçлеççĕ. Колхозсенчи ертсе пыракан вырăнсенче пурĕ 44 хĕрарăм ĕçлет.

Калинин ячĕпе тăракан колхозри доярка М. Тайрукова юлташ хăйне çирĕплетсе панă 7 ĕнерен 1.200-шер литр вырăнне, кашни ĕне пуçне 1.600-шер литр ытла сĕт суса илнĕ. «Родина» колхозри доярка А. Кавалерова юлташ кашни ĕнерен 1.436-шар литр, Сталин ячĕпе тăракан колхозри доярка М. Нянина юлташ 1.400-шер литр ытла, А. Новая юлташ кашни ĕнерен 1.200-шер литр ытла сĕт суса илнĕ.

«Искра» колхозри свинарка Т. Тихонова хăйне çирĕплетсе панă 8 сысна аминчен, кашнинех икшер хут çурлаттарса, кашни ама пуçне 19-шар çура, Максим Горький ячĕпе тăракан колхозри свинарка В. Иванова 10 сысна аминчен кашни ама пуçне 16-шар çура илсе ӳстернĕ.

«Родина» колхозри сурăх пăхакансем: А. Краснова хăйне çирĕплетсе панă 42 сурăхран 55 путек, Н. Кавалерова 54 путек илсе пурне те ӳстернĕ. Кун пек тĕслĕхсем тата нумай илсе кăтартма пулать.

Партин сталинла тĕрĕс политикине пула, социализмла çĕнĕ общество тунă çĕрте совет хĕрарăмĕ хăйĕн чăн-чăн вырăнне тупрĕ. Вăл Тăван çĕршыв ырлăхĕпе телейĕшĕн чунтан-чĕререн тăрăшса ĕçлет. Халĕ совет хĕрарăмĕ валли государствăна ертсе пырас ĕçе активлăн хутшăнма анлă çул уçса панă. 9 хĕрарăма район Совечĕн депутачĕсем пулма, 88 хĕрарăма ял Совечĕсен депутачĕсем пулма суйланă.

Районти государствăпа хуçалăх учрежденийĕсенче тата промышленность предприятийĕсемпе промысла артелĕсенче пурĕ 800 хĕрарăма яхăн ĕçлет. Партипе совет организацийĕсене, тĕрлĕ учрежденисемпе предприятисене ертсе пыракансем хушшинче — 107 хĕрарăм. Вăл шутран КПСС райкомĕн номенклатурине кĕрекеннисем 81 çын.

Кунсăр пуçне халăха вĕрентес ĕçре 152 хĕрарăм, медицина работникĕсем пулса 94 хĕрарăм, ялхуçалăх специалисчĕсем пулса 19 хĕрарăм ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче Совет правительствин наградисене илме тивĕçлĕ пулнă хĕрарăмсем те сахал мар.

Партин Шăмăршă райкомĕ, КПСС Центральнăй Комитечĕпе КПСС Чăваш обкомĕн кăтартăвĕсене пурнăçласа, хĕрарăмсем хушшинче ĕçлесси çине, вĕсене воспитани парас тата ертсе пыракан вырăна лартас ĕç çине тимлĕрех пăхакан пулчĕ. КПСС райкомĕ хĕрарăмсене обществăлла-производствăлла ĕçсене ытларах хутшăнтарма, вĕсен культурăлла шайне, коммунизмла ăнланулăхне ӳстерме тăрăшать. Кашни колхозрах хĕрарăмсен пухăвĕсене ирттеретпĕр. Вĕсенче хуçалăхпа политикăлла задачăсене тăтăшах сӳтсе яватпăр.

Пухусенче «Хĕрарăмсем миршĕн кĕрешес ĕçре», «Сталинла Конституци—тĕнчери чи демократилле конституци», «Партин XIX-мĕш съезчĕн итогĕсем тата ĕç хĕрарăмĕсен задачисем» тата ытти ыйтусем тăрăх докладсем туса панă. Кунсăр пуçне кашни колхозрах ялхуçалăхне малалла çĕклентерес, мĕнпур ялхуçалăх культурисемпе обществăлла выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес ыйтусем çинчен докладсемпе лекцисем, калаçусем пулса иртеççĕ. Докладсемпе лекцисем ирттерме КПСС райкомĕ хăйĕн докладчикĕсемпе лекторĕсене хутшăнтарать.

Çав ыйтусемпех юлашки вăхăтра район центрĕнчи учрежденисемпе организацисенче, предприятисенче те хĕрарăмсен пухăвĕсене ирттернĕ. 1953 çулăн пуçламăшĕнче икĕ хутчен хĕрарăмсен районти пухăвĕсене ирттертĕмĕр. Кунсăр пуçне, районта час-часах медицина работникĕсен пухăвĕсене ирттеретпĕр.

Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем ертсе пынипе районти хĕрарăмсем хуçалăхпа политикăлла кампанисене активлăн хутшăнаççĕ, ял Совечĕсемпе колхоз правленийĕсене кулленхи ĕçсенче пулăшса пыраççĕ. 1953 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче пулса иртнĕ вырăнти Советсен суйлавĕ вăхăтĕнче 467 хĕрарăм суйлав комиссийĕсенче ĕçлерĕ. Хĕрарăмсенчен 189 çын агитаторсемпе пропагандистсем пулса ĕçлет.

Хĕрарăмсене обществăлла-политикăлла ĕçе ытларах хутшăнтарас, вĕсен пултарулăхне ӳстерес, ĕçре пулăшса пырас майпа хĕрарăмсене КПСС райкомĕн пайĕсене, райком секретарĕсем патне калаçăва чĕнетпĕр. Райком работникĕсем ĕçхĕрарăмĕсене тĕрлĕрен сĕнӳсемпе канашсем параççĕ. Хăшпĕр юлташсен ĕçĕсене малтан вырăнта тĕрĕслесе тухса райком вĕсен отчечĕсене итлет, ĕçе лайăхлатмалли сĕнӳсем парать. Парти райкомĕ иртнĕ тапхăрта Пуянкасси ял Совет председателĕн М. Матвеева юлташăн, «Искра» артель председателĕн Корчагина юлташăн, Ирçе Тĕккинчи çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕн Е. Ерискина юлташăн отчечĕсене сӳтсе яврĕ, вĕсене ĕçе лайăхлатмалли сĕнӳсем парса пулăшрĕ.

Хĕрарăмсен ĕçри пултарулăхĕ палăрмалла ӳссе пырать. Парти райкомĕ вĕсене çĕнĕрен те çĕнĕ поручениесем парса, ĕçре пиçĕхтерет, аслăрах ĕçе куçарса лартма хатĕрлесе пырать.

КПСС райкомĕ аслăрах вырăнсене ӳстерсе лартма ятарласа резерв тунă. Унта кĕрекен работниксенчен 12 çын — хĕрарăмсем. Çав резервран эпир иртнĕ тапхăрта пурĕ 9 хĕрарăма ертсе пырас ĕçсене уйăрса лартнă. Сăмахран, Н. Хорькова юлташ малтан районти перекет кассинче бухгалтер пулса ĕçленĕ. Вырăнти Советсен кăçалхи суйлавĕнче ăна ĕçсынни депутачĕсен район Совечĕн депутатне суйларĕç. Н. Хорькова юлташ халĕ райсовет исполкомĕн секретарĕ пулса ĕçлет.

1953 çулта 2 хĕрарăма ял Совет председателĕ пулма суйласа лартнă. Е. Парфенова «Светлый путь» колхозра клуб заведующийĕ пулса ĕçлетчĕ. Халĕ вăл — ял Совет председателĕ. Малтан кая юлса пынă Шашкай ял Совечĕн ĕçĕ Е. Парфенова юлташ ертсе пынипе самаях лайăхланчĕ. Уйрăмах укçа-тенкĕ парăмĕсене пухас, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçсем лайăхланчĕç.

«Заря» колхозра кладовщик пулса ĕçленĕ М. Матвеева юлташа та ял Совет председателĕ пулма суйланă. М. Матвеева юлташ хăйĕн пултарулăхне кăтартать, çитменлĕхсене вăхăтра курать, вĕсене çийĕнчех пĕтерме тăрăшать. 1952 çулăн вĕçĕнче икĕ учительницăна партипе совет ĕçне, икĕ учительницăна комсомолăн ертсе пыракан ĕçне уйăрса лартнă.

Хĕрарăмсене ертсе пыракан ĕçсене лартас тĕлĕшпе çитĕнӳсем тунă, анчах çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Колхоз председателĕсем хушшинче пĕр хĕрарăм та çук. Çавăн пекех ял Совет председателĕсем хуçалăх организацийĕсен руководителĕсем, уй-хир бригадирĕсем, выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсем пулса ĕçлекен юлташсем хушшинче хĕрарăмсен йышĕ сахал.

Хĕрарăмсем хушшинче ĕçлессине хăшпĕр пуçламăш парторганизацисем хаклаmaççĕ. Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем хĕрарăмсен пухăвĕсене сайрахутра çеç ирттереççĕ е пачах та ирттермеççĕ. Хĕрарăмсене вĕрентес, вĕсен идейăлла-политикăлла пĕлĕвне, ĕçри квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе чылай çĕрте çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕ хĕрарăмсем хушшинче ĕçлессине пысăк вырăна хурса хаклать. Хĕрарăмсене политикăлла воспитани парас ĕçе вăйлатнăçемĕн вăйлатса пыни кирлĕ. Анчах та пирĕн районти ялсенче хĕрарăмсене воспитани парас, вĕрентес ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. Ялсенчи пуçламăш парторганизацисен ку тĕлĕшпе ытларах ĕçлемелле, КПСС райкомĕн те хăйĕн ĕçĕнче татăклă улшăну тумалла пулать.

В. АТЛАШЕВА,
КПСС Шăмăршă райкомĕн секретарĕ.

Колхозри мухтавлă çынсем

Пирĕн мухтавлă конюх,—тесе хисеплесе чĕнеççĕ «Большевик» тата «Знамя труда» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем Николай Пайманова В. Баранов конюхсем çинчен сăмах хускатсан.

Н. Пайманов «Большевик» колхозра 1932 çултанпа конюх пулса ĕçлет, хăйне шанса панă ĕçе юратса тăвать, ытти конюхсене пример кăтартать. Вăл колхоза çĕршер лаша ӳстерсе пачĕ. Н. Пайманов лашасен ăратне лайăхлатассишĕн тăрăшать. 1950 çулта хăйне çирĕплетсе панă кĕсресенчен 9 тиха, 1952 çулта 8 тиха илсе çитĕнтерчĕ. Кăçал та кашни кĕсререн пĕрер тиха илсе çитĕнтерессишĕн кĕрешет.

«Знамя труда» колхозра Б. Баранов юлташ 17 çул хушши лашасем пăхас ĕçре ĕçлет. Лашасене вăл лайăх пăхать, хăйĕн ĕçне яланах юратса, тӳрĕ кăмăлпа туса пырать. Кăçал Баранов юлташ хăйне çирĕплетсе панă кĕсресенчен 9 тиха пăхса илчĕ. Тихасем пурте сывă ӳсеççĕ.

Ишлей районĕ. **Ф. ОЛАНГИН.**

Выляв укçи илеççĕ

Пирĕн государство заемĕсем Тăван çĕршывăн вăй-хăватне тĕреклетме, ĕçсыннисен пурнăçне малалла лайăхлатма пулăшаççĕ. Государство заемĕсем тăрăх ĕçсыннисем выляв укçи нумай илеççĕ. Ĕçсыннисем правительство кăларакан заемсене хавасланса илеççĕ.

Кăçалхи пĕррремĕш кварталта Шупашкар хулинчи перекет кассисем заем облигацийĕсем тăрăх 1.347.000 тенкĕ выляв укçи тӳленĕ. Май уйăхĕнче вара 807.000 тенкĕ тӳленĕ. Çав шутра икĕ çын 5-шер пин, 107 çын пиншер тенкĕ тата пин тенкĕрен каярах выляса илнисем 4.908 çын пулнă.

* * *

СЕНТЕР. «Прожектор» колхоз членĕ Максим Григорьевич Сапожников нумаях пулмасть государствăн 2 процентлă заемĕн облигацине Атар вулав çуртне тĕрĕслеме илсе пынă. Вулав çурчĕн заведующийĕ Ф. Портнов облигацисене тĕрĕслесен унăн облигацийĕ çине 11.600 тенкĕ выляв ӳхнине палăртнă.

М. ИСАЕВ.

* * *

ЕТĔРНЕ. Государство заемĕсен облигацийĕсем тăрăх ĕçсыннисем тупăш нумай илеççĕ. Районти перекет кассисем кăçал 545.600 тенкĕ выляв укçи, çав шутра пысăк вылявсем 64 пин тенкĕ тӳленĕ. Пĕр çын 50 пин тенкĕ выляса илнĕ.

И. ПЕТРОВ.

Рационализаторла сĕнӳсем

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри тимĕрçĕ цехĕнчи рабочисем, инженерсемпе техниксем технологи процесне çĕнетсе лайăхлатма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, материалсем перекетлеме пулăшакан паха сĕнӳсем параççĕ.

Урослов мастер пĕр йышши детальсем туса кăлармалли çĕнĕ штамп шухăшласа кăларнă. Унăн сĕнĕвне пурнăçа кĕртни çулталăкра 17 пин тенкĕ перекетлеме, ĕç тухăçлăхне тăват-пилĕк хут ӳстерме пулăшать. Техникăлла контроль пайĕнче ĕçлекен Киляков юлташ панă сĕнĕве пурнăçлани электродсен каяшне 20—30 процент таран чакарать.

Юлашки вăхăтра рабочисем, инженерсемпе техниксем 25 рационализаторла сĕнӳ панă. Çав сĕнӳсене пурнăçлани цеха производство планне тăтăшах ăнăçлă тултарса пыма, материалсем перекетлеме пулăшать. Пилĕк уйăхра цех планран ирттерсе 100 тонна ытла деталь туса кăларнă.

Рабочисем, инженерсемпе техниксем Чугун çул работникĕсен кунне ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешеççĕ.

И. МАРКОВ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

Çĕрпӳри пир-авăр фабрики сывăхĕнче çул питĕ япăххи, çакна пула кĕркуннепе çуркунне е çумăрсем вăхăтĕнче унта автомашинăсемпе çӳреме май килменни çинчен çырнă çырăва «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Çĕрпӳ хула Совет исполкомне, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма янăччĕ.

Хула Совет исполкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, редакцирен тĕрĕслеме янă çырăва ятарласа исполкомăн ларăвĕнче сӳтсе явнă, фабрика директорне Иванов юлташа фабрика çывăхĕнчи çула юсаттарма хушнă. Халĕ кунта çула юсанă.

* * *

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине Чурачăк районĕнчи Кăшнăруйĕнчи çыхăну уйрăмĕ ĕçсыннисен ыйтăвĕсене кирлĕ пек тивĕçтерсе пырайманни, çыхăну уйрăмĕн начальникĕ Петров юлташ ĕçпе пыракансемпе хăркашса калаçни çинчен çыру килнĕччĕ. Редакци çырăва СССР Çыхăну министерствин республикăри управленине янăччĕ. Çыхăну управленийĕ Петров юлташ çинчен çыхăну уйрăмĕнчи работниксен пухăвĕнче сӳтсе явни, ăна пуху асăрхаттарса хăварни çинчен пĕлтерчĕ.

Çырура çавăн пекех Кăшнăруйĕнче телефон йĕркеллĕ ĕçлеменнине кăтартнă пулнă. Çыхăну управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, телефон ĕçне лайăхлатас шутпа кирлĕ ĕçсем туса ирттерме палăртнă.

* * *

Калинино районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри пысăк çитменлĕхсем çинчен çырнă çырăва «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ районти ялхуçалăх пайне, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма янăччĕ.

Ĕçсынни депутачĕсен Калинино район Совет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕ пĕлтернĕ тăрăх, çырура асăннă çитменлĕхсене пĕтересси çинчен колхоз правленийĕн ларăвĕнче сӳтсе явнă. Иртнĕ кĕркунне кантăр тата çĕрулми çĕртсе колхоза пысăк сиен кӳнĕ уйрăм çынсене ответ тыттарас шутпа ĕçе районти прокурора панă.

* * *

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Комсомольскинчи чайнăйри çитменлĕхсем çинчен калакан çырăва райисполкома тивĕçлĕ мерăсем йышăнма янăччĕ.

Ĕçсынни депутачĕсен район Совет исполкомĕ çырура асăннă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ. Ĕçсыннисен ыйтăвĕсем çине чунсăр пăхнăшăн тата тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе пыманшăн официантка пулнă Хораськинăна вырăнтан кăларнă. Райпотребсоюзăн ертсе пыракан работникĕсене район Совечĕн исполкомĕ ответ тыттарнă.

Халăх ырлăхĕшĕн тăрăшасси— Коммунистсен партийĕн чи аслă законĕ

Совет халăхĕ Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе мирлĕ ĕç тăвать, коммунизм строительствине ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Вăрçă хыççăнхи кĕске вăхăтрах тăшман сĕмĕрнĕ промышленноçа, транспорта, ялхуçалăхне çĕнĕрен юсанă тата социализмла экономикăн пур отраслĕсенче те вăрçăчченхи шайран чылай пысăкрах çитĕнӳсем тунă.

Халăх хуçалăхĕ çултан-çул пĕрмаях ӳссе пынă май совет халăхĕн материальнăй пурнăçĕпе культура шайĕ малалла ӳссе лайăхланса пырать. Пирĕн çĕршывра социализмла производствăна аталантарассин тĕп тĕллевĕ обществăн ялан ӳссе пыракан материальнăй ыйтăвĕсене тата культура ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтересси пулса тăрать.

Ĕçсыннисен пурнăç шайĕ пĕрмаях ӳссе пырасси социализмла обществăн характерĕнчен тухса тăрать. Ку вăл çакна пĕлтерет: пирĕн обществăра эксплуататорла классене тахçанах пĕтернĕ, çынна çын эксплуатацилени те çук, производство орудийĕсемпе хатĕрĕсем обществăлла социализмла харпăрлăх пулса тăраççĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви, социализмăн экономикăлла тĕп законĕ хушнисене шута илсе, пирĕн çĕршывăн экономикăлла аталанăвне халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те тăтăшах аталантармалли çулпа илсе пыраççĕ, çакă вăл ĕçсыннисен пурнăçне тăтăшах лайăхлатса пыма май парать. Нумай çулхи опытран совет çыннисем çакна курса ĕненчĕç: партипе правительствăн халăх интересĕсемсĕр пуçне урăх нимӗнле интерессем те çук. Партипе правительство рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин тата пĕтĕм совет çыннисен пурнăçне лайăхлатса пырас ĕçе тĕп задача тесе шутлаççĕ. Совет çыннин ырлăхĕшĕн, совет халăхне чечеклентерсе аталантарассишĕн тăрăшасси пирĕн партипе правительствăшăн чи аслă закон пулса тăрать.

Халăх хуçалăхĕ вăйланса пынă май пирĕн çĕршывра наци тупăшĕ ӳссе пырать. Паллă ĕнтĕ, капитализмла çĕршывсенче ĕçсыннисем тăвакан наци тупăшĕн чи пысăк пайĕ эксплуататорла классен аллинче юлать. Пирĕн Совет Союзĕнче наци тупăшĕ пĕтĕмпех ĕçсыннисен тупăшĕ, вĕсен пуянлăхĕ. Пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем хăйсен материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене тивĕçтерме наци тупăшĕнчен тăватă пайран виçĕ пайне яхăн илсе тăраççĕ, юлашки пайĕ социализмла производствăна сарса пыма тата пĕтĕм государствăпа обществăн ытти кирлĕ ыйтăвĕсене тивĕçтерме каять.

Совет Союзĕнче наци тупăшĕ ӳсни ĕçсыннисен материальнăй пурнăçĕ лайăхланнăçемĕн лайăхланнине питĕ уçăмлăн кăтартса парать. 1940—1951 çулсем хушшинче ССР Союзĕн наци тупăшĕ 83 процент таран, 1952 çулта, 1951 çулхипе танлаштарсан, татах 11 процент ӳснĕ.

Совет халăхĕн пурнăçĕ лайăхланни рабочисемпе служащисем укçа ĕçлесе илни тата реальнăй ĕç укçи ӳснинче, хресченсем илекен тупăшсем ӳснинче палăрса тăрать. Рабочисемпе служащисен реальнăй ĕç укçине тата хресченсен реальнăй тупăшĕсене ӳстермелли паллă çăлкуç Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви куллен кирлĕ таварсен хакне тăтăшах йӳнетни пулать. Таварсем ваккăн сутмалли хаксене пилĕк хут йӳнетнĕ хыççăн, иртнĕ çул вĕçĕнче халăх апатçимĕçпе промышленность таварĕсемшĕн, 1947 çулхи тăваттăмĕш кварталтипе танлаштарсан, вăтам шутпа икĕ хут сахалтарах тӳленĕ.

Кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕнче апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли хакĕсене вăрçă хыççăнхи вăхăтра улттăмĕш хут йӳнетнĕ. Ку вăл каллех пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхăн пурнăç условине малалла лайăхлатса пыма пулăшать, совет укçине çирĕплетет. Тавар хакĕсене 1953 çулта йӳнетнин паллă уйрăмлăхĕ çакăнта пулать: ку хутра куллен кирлĕ мĕнпур йышши таварсен—апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен хакĕсене йӳнетнĕ, çавна май, унччен маларах таварсен хакĕсене йӳнетнипе танлаштарсан, пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем тата пысăкрах усă курчĕç. Таварсен хакне çĕнĕрен йӳнетни государствăпа коопераци суту-илĕвĕ енĕпе кăна халăха çулталăкра 46 миллиард тенкĕ усă парать. Çакна асăнса хăварни вырăнлă: 1951 çулта хаксене йӳнетни халăха 27,5 миллиард тенкĕлĕх, 1952 çулта—23 миллиард тенкĕлĕх усă панă.

Ĕçсыннисен пурнăçĕ, пирĕн çĕршыври рабочисемпе служащисен ĕç укçи, хресченсен ялхуçалăхĕнчен илекен тупăшĕ ӳссе пынисĕр тата куллен кирлĕ таварсен хакĕсене йӳнетнисĕр пуçне, урăх енĕпе те лайăхланса пырать. Совет государстви культурăлла ĕçсем валли, тĕрлĕрен пособисемпе тӳлевсем енĕпе укçа-тенкĕ питĕ нумай уйăрса парать. Пирĕн çĕршыври рабочисемпе служащисем государство шучĕпе социальнăй страхованишĕн пособи, социальнăй обеспечени енĕпе пенси, санаторисене, канмалли çуртсене тата ачасен учрежденийĕсене кайма укçасăр е йӳнĕ хакпа путевкăсем, тӳлевлĕ отпуск çулсерен илсе тăраççĕ. Хулари тата ялти пур ĕçсыннисене те тӳлевсĕр медицина пулăшăвĕ параççĕ. Государство нумай ачаллă хĕрарăмсемпе пĕччен амăшсене пособи тӳлет, пуçламăш тата çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче тӳлевсĕр вĕрентет, вĕренекенсене стипенди парать. Çав ĕçсем енĕпе государство расхочĕсем пĕрмаях ӳссе пыраççĕ. Вăрçăченхи 1940 çулта хулари тата ялти ĕçсыннисем çавăн пек тӳлевсемпе льготăсем 40,8 миллиард тенкĕ, 1951 çулта—125 миллиард тенкĕ, 1952 çулта—129 миллиард тенке яхăн илнĕ.

Пирĕн çĕршыври ĕçсыннисен пурнăçĕ пĕрмаях лайăхланса пынине çакăн пек факт ĕнентерӳллĕн кăтартса парать: рабочисемпе служащисен реальнăй тупăшĕсем (ĕçлекен пĕр çын пуçне шутласан) 1951 çулта 1940 çулхинчен 57 процента яхăн тата хресченсен реальнăй тупăшĕсем (ĕçлекен пĕр çын пуçне) 60 процента яхăн ытларах пулнă. Рабочисемпе служащисен тупăшĕ 1952 çулта, 1951 çулхипе танлаштарсан, 7 процент, хресченсен тупăшĕ 8 процент ӳснĕ.

Партипе правительство халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн ырми-канми тăрăшнине кашни совет çемйи, кашни совет çынни туйса тăрать. Донбасри Воровский ячĕпе тăракан шахтăри врубмашинист Д. Пискурев çапла каласа парать: «Манăн çичĕ ача. Вĕсем лайăх тумланнă, пурте вĕренеççĕ. Кашни ĕç укçи илмессеренех эпĕ вĕсене çĕнĕ кĕпе-тумтир, кĕнекесем илсе паратăп. Çулла ачасем пионерсен лагерĕсене, дачăсене каяççĕ. Манăн çемье пурнăçĕ куллен-кун лайăхланса пырать. Эпĕ кашни уйăхрах 6—7 пин тенкĕ ĕçлесе илетĕп. Иртнĕ çулта «Победа» автомашина туянтăм. Халĕ хамăн пурăнмалли çурта туса пĕтеретĕп».

Совет халăхĕ хамăр обществăн пурнăç условийĕсене лайăхлатас енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн тивĕçлипе мухтанать, хăйĕн вăйĕсене тата та пысăкрах çитĕнӳсем тума мобилизацилет. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ ССР Союзне аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче халăх хуçалăхне çĕнĕрен вăйлăн аталантарма, халăхăн материальнăй пурнăçĕпе культура шайне çĕклес енĕпе чылай пысăк ӳсĕмсем тума палăртнă. Пилĕк çул хушшинче ССР Союзĕн наци тупăшне 60 процентран кая мар, рабочисемпе служащисен реальнăй ĕç укçине, таварсем ваккăн сутмалли хаксене йӳнетнине шута илсе, 35 процентран кая мар, колхозниксен укçан тата натурăпа илекен тупăшĕсене (укçа çине куçарса) 40 процентран кая мар ӳстерме пăхнă.

Ĕçсыннисен пурнăçĕ лайăхланни вĕсем таварсем нумай илме пултарнинчен те, суту-илӳре тавар çаврăнăшĕ ӳссе пынинчен те уçăмлăн куранса тăрать. Юлашки çулсенче тавар çаврăнăшĕнче промышленность таварĕсен, уйрăмах нумай вăхăта пыракан япаласен: автомобильсен, мотоциклсен, велосипедсен, радиоприемниксен, телевизорсен, сĕтел-пукан, холодильниксен, музыка инструменчĕсен хисепĕ чылай ӳсрĕ. Халăх халĕ ĕнтĕ пысăк пахалăхлă пир-авăр ыйтать, вăл ытларах çăм, пурçăн, искусственнăй çипсенчен тата лайăх сортлă çĕр мамăкĕнчен тунă пир-авăр илме тăрăшать. Совет çыннисем таварсем нумай илме пултарни Уралти хуласенчен пĕрин — Нижний Тагил тĕслĕхĕнчен те курма пулать. 1950—1952 çулсенче ку хулари ĕçсыннисем 8.458 радиоприемник, 8.106 велосипед, 1.798 мотоцикл, «Победа» тата «Москвич» автомашинăсем 157, 120 пианино илнĕ.

Ĕçсыннисем тавар нумай илнине шута илсе, вĕсем мĕн ыйтнине тивĕçтерме тăрăшса, партипе правительство халăха куллен кирлĕ таварсемпе апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларассине пĕрмаях ӳстерсе пыраççĕ. Производство хатĕрĕсем тăвакан производство тата ялхуçалăх продукчĕсем ӳсни апат-çимĕç промышленноçне аталанма çирĕп никĕс туса параççĕ.

Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тăрăх çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçне малалла вăйлăн аталантарма палăртнă. Вĕсем туса кăларакан продукци 70 процентран кая мар ӳсмелле. Çĕр мамăкĕнчен пир-авăр тăвакан комбинатсем, çĕр мамăк тасатакан тата искусственнăй пир-авăр тăвакан заводсем, пурçăн, çĕвĕ çĕлекен, трикотаж туса кăларакан, сăран атă-пушмак çĕлекен предприятисем, сахăр завочĕсемпе çу кăларакан, пахча çимĕç типĕтекен заводсем, конфет-премĕк, чей, консерв, сăра, эрех тăвакан, аш-какай, пулă, çу, сыр тăвакан промышленность предприятийĕсем нумай тума палăртнă. Апат-çимĕç тата çăмăл промышленность енĕпе пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план заданийĕсем ăнăçлăн пурнăçланса пыраççĕ. Çак промышленность туса кăларнă продукци 1951 çулта 1940 çулхинчен 43 процент ытла, 1952 çулта 1940 çулхинчен 60 процента яхăн ытларах пулнă.

Пирĕн çĕршывра куллен кирлĕ таварсен ассортименчĕ малалла нумайланса, пахалăхĕ лайăхланса пырать, государствăпа коопераци суту-илĕвĕ сарăлсах пырать. 1952 çулта кăна 7 пине яхăн çĕнĕ магазинсем уçнă. Хуласемпе ялсенче апат-çимĕç таварĕсем, тумтирсем, атă-пушмак, пир-авăр, сĕтел-пукан, савăт-сапа, хуçалăх таварĕсем, культура ыйтăвĕсене тивĕçтермелли япаласем тата строительство материалĕсем сутакан магазинсен шучĕ пĕрмаях ӳссе пырать.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕçсыннисен пурнăç условине пур енĕпе те лайăхлатассишĕн яланах тăрăшаççĕ. Пирĕн çĕршывра пурăнмалли çуртсем тăвас ĕç анлăн сарăлнă. Иртнĕ çул хушшинче кăна предприятисем, учрежденисемпе вырăнти Советсем, çавăн пекех хуласемпе рабочисен поселокĕсенчи ĕçсыннисем государство пулăшнипе пурăнмалли çуртсем 27 миллион тăваткал метр чухлĕ ытла тунă. Кунсăр пуçне, ялсенче 370 пин пӳрт лартнă. Совет правительстви Мускав хулине çĕнетмелли тĕп план туса çирĕплетнĕ. Çав планăн чи кирлĕ пайĕ çĕнĕ çуртсем тăвасси пулать. Çитес ик-виçĕ çулта Мускавра çулталăкне миллион тăваткал метр чухлĕ çуртсем лартма тытăнмалла. Мускавра питĕ çӳлĕ çуртсем, вĕсен шутĕнчех пурăнмалли çуртсем тăвасси ăнăçлăн пырать. Çакăншăн совет çыннисем мухтанса савăнаççĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче государство енĕпе çуртсем тума, тăваттăмĕш пилĕкçуллăхпа танлаштарсан, икĕ хута яхăн ытларах укçа-тенкĕ пама палăртнă. Çакăнпа пĕрлех хуласемпе рабочи поселоксенче пурăнакансен коммунальнăй условийĕсене малалла лайăхлатма, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерме, водопроводсемпе канализаци шутне ӳстерме, çуртсене ăшă тата газ парса тăрассине, хула транспортне, хула благоустройствине лайăхлатма кирлĕ ĕçсене тăваççĕ.

Пирĕн çĕршывра çынсем—чи хаклă капитал. Совет государстви вĕсене телейлĕ те тулăх пурнăç туса пама тимлĕн тăрăшать. Партипе правительство халăх сывлăхне сыхлассишĕн яланах хытă тăрăшнă тата халĕ те тăрăшаççĕ. Сывлăха сыхлама государство укçа-тенкĕ çулсерен ытларах парса тăрать.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăх телейĕшĕн тăрăшни пирĕн çĕршывра культура строительстви анлăн сарăлнинчен те питĕ уçăмлăн курăнать. ССР Союзĕнче вĕренекенсен хисепĕ хальхи вăхăтра 57 миллион çын, 1940 çулхинчен 8 миллион çын ытларах, шутланать. Çамрăксене çичĕ çул тата вунă çул вĕрентесси лайăхланнă. Хальхи вăхăтра пирĕн çĕршывра аслă шкулсем 800 ытла, вĕсенче 1.400 пин çын ытла вĕренет. Хуласемпе ялсенче культурăпа çутĕç учрежденийĕсен шучĕ ӳссе пырать. Коммунистсен партийĕ наукăна, литературăна тата искусствăна малалла аталантарассишĕн ырми-канми тăрăшать.

Пирĕн çĕршывра ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатас енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсем пĕтĕм тĕнче умĕнче социализмла системăн пахалăхне, вăл капитализмла системăран малта тăннине çĕнĕрен те çĕнĕрен кăтартса параççĕ. Коммунистсен партийĕ вĕрентсе ӳстернĕ совет çыннисем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ, вĕсем малашне тата та хастарлăрах ĕçлеме сăмах параççĕ. Пĕтĕм халăх хуçалăхне аталантарса, парти ĕçсыннисен пурнăçĕпе культура шайне малалла вĕçĕмсĕр лайăхлатса пырас задача лартать.

Совет халăхĕ çакна ăнланать: унăн пурнăçĕ пĕрмай лайăхланса пымалли çăлкуç социализмла производствăна чи паха техника никĕсĕ çинче ӳстерсе аталантарни пулса тăрать. Совет государстви мĕн чухлĕ пуянрах, ĕçсыннисен пурнăçне малалла лайăхлатса пыма та майсем ытларах пулаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ совет çыннисем пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн социализмла ăмăртăва куллен-кун анлăрах сарса пыраççĕ, ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн, продукци пахалăхне ӳстерессишĕн, унăн хăйне ларакан хакне йӳнетессишĕн, халăх хуçалăхĕнчи пуян резервсемпе усă курассишĕн ырми-канми тăрăшаççĕ, перекетлĕх режимне çирĕппĕн тытса пыраççĕ.

Пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра таччăн пĕтĕçнĕ. Вĕсем халăх интересĕсене малти вырăна хуракан партипе правительство политикине пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешеççĕ.

А. ШИШКОВ.

Днепропетровск облаçĕ. Кривой Рог бассейнĕнчи малта пыракан «Большевик» шахта коллективĕ çулталăкри плана срокчен пурнăçлассишĕн ăмăртса ĕçлет.

Шахта коллективĕ халĕ кашни талăкра план тăрăх 1955 çул вĕçĕнче кăларма палăртнă чухлĕ çĕр кăмрăкĕ кăларать. 4-мĕш участокри П. Н. Рожков ертсе пыракан бригада ĕçре уйрăмах пысăк çитĕнӳ тунă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сылтăмран сулахаялла): 4-мĕш участок начальникĕ Л. Е. Хлыстов, бригадир П. Н. Рожков, проходчиксем И. А. Пасс тата Г. М. Чигиров.

С. ВИЛЬТМАН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ЛАЙĂХ ÇУЛ-ЙĔРШĔН!

ÇУЛ-ЙĔР СТРОИТЕЛЬСТВИ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН

СВОДКА

(июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне, процентпа)

Районсем, çул участокĕсем	Материал турттарни	Çĕр пулани	Чул сарни	Кĕпер туни
1. Шупашкар	126	100	91	56
2. Тăвай	117	117	75	100
3. Муркаш	100	107	95	40
4. Чкаловски	92	92	110	58
5. Шăхасан	90	168	90	61
6. Сĕнтĕрвăрри	84	110	30	61
7. Ишлей	75	93	61	44
8. Пăрачкав	74	10	25	61
9. Советски	73	55	39	6
10. Элĕк	70	87	70	27
11. Чурачăк	70	96	35	10
12. Калинино	70	89	—	9
13. Улатăр	66	72	64	25
14. Çĕмĕрле	64	100	14	59
15. Хĕрлĕ Чутай	63	82	55	38
16. Елчĕк	62	162	30	54
17. Октябрьски	61	19	27	25
18. Канаш	61	50	20	91
19. Первомайски	96	64	—	14
20. Çĕрпӳ	60	90	36	21
21. Комсомольски	53	67	76	59
22. Куславкка	53	59	50	59
23. Етĕрне	50	50	31	49
24. Красноармейски	50	36	66	—
25. Вăрмар	49	55	38	87
26. Сĕнтĕр	44	48	37	57
27. Кувакино	40	40	26	29
28. Вăрнар	30	113	1	51
29. Шăмăршă	30	11	—	20
30. Йĕпреç	28	26	—	36
243 çул участокĕ	66	94	29	29
50-мĕш МДС	40	67	36	1
242 çул участокĕ	54	—	—	19
241 çул участокĕ	51	36	28	72
240 çул участокĕ	30	76	3	25

Хастарлă бригадир

ЧУРАЧĂК. «Красное Сормово» колхозри çул-йĕр бригадирне М. Николаева юлташа таврари ялсенче пурте пĕлеççĕ. Вăл бригада ĕçне лайăх йĕркелеме пĕлекен ăста организатор. Унăн бригади плана çулленех ирттерсе тултарать тата хăйне çирĕплетсе панă участока яланах лайăх тытать.

Бригада Вутлан ялĕ вĕçĕнчи çула юсарĕ, 40 кубометр чул, 101 кубометр хăйăр турттарчĕ, 100 метр тăршшĕ çул çинчи кивĕ чула сӳтсе çĕнĕрен сарчĕ. Çул-йĕр мастерĕ бригада ĕçне лайăх хак пачĕ.

Çак бригадăра самăр колхозник пĕр [illegible] ĕçлессĕ. Колхоз правленийĕ (председателĕ Е. Васильев юлташ) бригадăна [illegible] пех туса парать. Çулсене хăвăртрах юсаса пĕтерес тесе, колхоз правленийĕ бригада çумне вăхăтлăха 16 çын çуран ĕçлеме, 16 лавçă уйăрса панă.

Николаева юлташ ертсе пыракан бригада кăçалхи çул-йĕр ĕçĕсен планне тултарчĕ.

В. МУТКИН.

Чул саракансем

КАНАШ. «Мотор» колхозран çул çинче куллен 30—35 çын çуран тата 25—28 лавпа ĕçлеççĕ. Плана срокчен тултарассишĕн саралнă социализмла ăмăртура П. Ивановпа Д. Никитин юлташсем ертсе пыракан бригадăсем малта пыраççĕ.

Чул сарнă çĕрте ĕçлекен комсомолецсемпе çамрăксем В. Матвеев, Г. Кузьмин, Г. Чудин юлташсем куллен 20-шер тăваткал метр чул сараççĕ.

Колхоз çул çинче тумалли ĕçсене çак кунсенче пурнăçлать.

Г. ВАСИЛЬЕВ.

ХИСЕП ХĂМИ

Ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе КПСС райкомĕсем, Çул-йĕр тата транспорт хуçалăх управленийĕ тăратнă тăрăх çул-йĕр строительстви планне срокчен тултарнăшăн республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

СĔНТĔРВĂРРИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

«Сĕнтĕрпуç» колхоз (председателĕ Н. Кузнецов юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ В. Никодимов юлташ, çул-йĕр бригадирĕ В. Абрамов юлташ). Колхоз çĕр чавса купаламалли çулталăкри плана 104 процент, чул хатĕрлемелли тата турттарса кăлармалли плана 100 процент тултарнă.

Ĕçе хăвăртлатар

(Редакцине килнĕ çырусене пăхса тухни)

Çул-йĕр строительствинче ĕçлесси кашни колхозникăн патриотла тивĕçĕ пулса тăчĕ. Тăвай районĕнчи колхозниксемпе çул-йĕр работникĕсен пуçарăвĕпе илемлĕ çулсем тăвассишĕн республикăра социализмла ăмăрту анлă сарăлса кайрĕ. Малта пыракан районсем, колхозсем, бригадăсем хăйсен Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçне чыслăн пурнăçлаççĕ.

— Çĕмĕрле районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозран, — тесе пĕлтерет А. Афанасьев юлташ,—çул çинче 60 çын çуран, пилĕк лав ĕçлет. Çул-йĕр бригадине Совет Çарĕнчен таврăннă Павлов юлташ ертсе пырать. Бригадăра ял Совечĕн депутачĕсем Кириллова юлташпа Терентьева юлташ, Заликовпа Малов комсомолецсем ĕçлеççĕ. Ял Совет исполкомĕн председателĕ Николаев юлташ, колхоз председателĕ Николаев юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Мостайкин юлташ бригадăра докладсем, калаçусем часчасах ирттереççĕ, ăмăртса ĕçлеме пулăшаççĕ, агитаторсем хаçат-журналсем вуласа параççĕ, боевой листоксем тăтăшах кăлараççĕ. Ĕçе çавăн пек лайăх йĕркеленипе колхозниксем нормăна тăтăшах ирттерсе тултараççĕ. Кириллова, Терентьева, Заликов, Малова юлташсем кулленхи нормăна ик-виç хут ирттерсе тултараççĕ. Бригада 300 метр тăршшĕ çула юсаса, хăйăр сапрĕ. Вăл тунă ĕçе лайăх хак панă.

— Шăхасан районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз,—тесе пĕлтерет Г. Исаев юлташ—çул-йĕр ĕçĕсен планне тăтăшах ăнăçлă тултарса пырать. Çапла [illegible] çинче çĕр кăмрăк смали сармалли çула юсаса хатĕрлемелле. Çул-йĕр бригадин бригадирĕ А. Кузьмин юлташ нормăна куллен ирттерсе тултарать, пур ĕçе те лайăх тăвать.

Етĕрне районĕнчи «Большевик» колхоз чул кăлармалли задание срокчен пурнăçланă, 120 метр тăршшĕ ытла çул çине чул сарнă. Кун çинчен редакцине колхозри парторганизаци секретарĕ П. Григорьев юлташ çырса пĕлтерчĕ.

Ĕç ăнăçлă пулса пырасси массăллаполитикăлла ĕçе лайăх йĕркеленинчен, социализмла ăмăртăва анлăн сарнинчен килет. Е. Захаров юлташ пĕлтернĕ тăрăх, Вăрнарти культура çуртĕ ятарласа агиткультбригада организациленĕ. Çак бригада çул çинче концертсем парать, ялсенчи клубсемпе вулав çурчĕсем нумайăшĕ куçса çӳрекен библиотекăсем йĕркеленĕ. Нумаях пулмасть КПСС райкомĕн лекторĕ В. Данилов юлташ колхозниксене тĕнчери лару-тăру çинчен доклад туса панă.

Паха тĕслĕхсем çинчен ытти районсенчен те чылай çырса пĕлтереççĕ. Çав вăхăтрах нумай корреспондентсем хăшпĕр районсемпе ял Совечĕсенче тата колхозсенче çул-йĕр ĕçне хакламаннине, государство заданине вăхăтра пурнăçлассишĕн уйрăм работниксем ответлăха туйманнине палăртаççĕ, çитменлĕхсене пĕтерме, ĕç хăвăртлăхне ӳстерме пулăшакан паха сĕнӳсем параççĕ.

Октябрьски районĕнчи чылай колхозсем ĕçе вăхăтра тытăнман, хăшпĕр ял Совечĕсемпе колхозсен председателĕсем хаклă вăхăтпа усă курма тăрăшмаççĕ, колхозниксене хăйсен тивĕçне пурнăçлама мобилизацилемеççĕ. В. Муткин юлташ редакцие çапла çырса пĕлтерет: «Красный Октябрь» колхоз ĕçе тытăнмапа пĕрех. Колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ И. Парамонов юлташ каланă тăрăх, нумай колхозниксем вăхăта туя кайса е туй курса, ярмаркăра çӳресе ирттереççĕ. В. Муткин юлташ колхозпа ял Совечĕн руководителĕсене государство çирĕплетсе панă плана тултарассишĕн хăйсен ответлăхне ӳстерме, колхозниксене ĕçе мобилизацилеме сĕнет.

Колхозниксем массăллăн ĕçленĕ вăхăтра çул-йĕр работникĕсен уйрăмах пуçарулла пулмалла, ыйтусене çийĕнчех татса памалла, малта пыракансен опычĕпе меслетне пĕтĕçтерсе сармалла. Çакна хăшпĕр работниксем ăнланса илеймен пулас.—Лукин десятник пире ăшă кăмăлпа кĕтсе илмарĕ, час-часах вăрçса ятлама пăхать, лайăх ĕçлеме вĕрентмест. Ĕç вырăнне малтанах йĕркелесе хуман, участоксене [illegible] Шăхасан районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ И. Васильев юлташ.

Çул-йĕр строительствинче хăйне евĕрлĕ уйрăмлăх пур: çулăн пĕчĕк участокне е пĕр кĕпере вăхăтра юсаса пĕтерменни те халăх хуçалăхне сиен кӳрет, грузсем турттарма чăрмантарать. Канаш районĕнчи Пĕршенер ялĕпе Комсомольски районĕнчи Асанкасси ялĕ хушшинче икĕ кĕпер пур. Анчах вĕсем юсавлă мар. Вĕсене хăвăртрах юсамалла.

Уйрăмах элеваторсем, «Заготзерно» пункчĕсем, чугун çул станцийĕсемпе пристаньсем патне пыракан çулсене юсасси çине тимлĕн пăхни кирлĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕ çул-йĕр органĕсемпе районсенчи партипе совет организацийĕсем умне çакăн пек задача кăларса тăратрĕç: тырă вырма тухиччен республика территорийĕнчи мĕнпур çулсемпе кĕперсем тăрăх автомашинăсемпе лавсем пĕр чăрмавсăр çӳремелле тумалла.

Комбинатра йывăç типĕтес ĕçе йĕркелемелле

Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕн коллективĕ çулталăкри производство планне декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илчĕ. Панă сăмаха чыслăн пурнăçласси пур цехсем те пĕр тикĕс ĕçленинчен, уйрăмах йывăç детальсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа типĕтсе панинчен килет.

Икĕ çул каялла кунта йывăçа электричествăпа типĕтмелли камера ĕçе кĕчĕ. Вăл сушилкăн хăватне чылай вăйлатмаллачĕ. Анчах пуçăннă ĕçе вĕçне çитерес тесе тăрăшманнипе ку çĕнĕ меслетпе кирлĕ пек усă курмаççĕ. Йывăçа ку камерăра типĕтесси пăспа типĕтнинчен хакла ларать, мĕншĕн тесен типĕтмелли процесс проектпа пăхнинчен 10 хут ытла вăраха каять. Çавăн пирки хăшпĕр руководительсем: электричествăпа типĕтесси прогрессивлă меслет мар, тесе калама пăхаççĕ.

Мĕншĕн ку çакăн пек пулса тухатьха? Йывăçа электричествăпа типĕтнĕ çĕрте икĕ мел пур. Вĕсенчен пĕринпе пирĕн комбинатра усă кураççĕ. Ку мелпе типĕтнĕ чухне йывăçа электрод пластинисем (металран тунă сеткăсем) хушшине хураççĕ, йывăçпа электрод пластинине тăчă-тăчă пĕрлештерес тесе, штабеле çиелтен хĕстерсе е груз хурса пусараççĕ. Унсăрăн контакт пулмасть. Контакт пулмасан вара типĕтекен йывăç тĕллĕн-тĕллĕн кăмрăкланса юрăхсăра тухать.

Электричествăпа çакăн пек типĕтнĕ чухне типĕтекен йывăç хушшине прокладка хумасан сывлăш кĕреймест, çавна пула йывăçран тухакан нӳрлĕх сывлăша тухса каяймасть. Типес процесс çапла вара вăраха каять.

Иккĕмĕш мелпе типĕтнĕ чухне детальсене çӳлелле тăракан висĕ электрод хушшине купалаççĕ. Электродсенчен пĕри штабль варринче çакăнса тăрать, иккĕшне штабелĕн икĕ енчен блокран çакса яраççĕ. Типекен материалпа вĕсем перĕнмеççĕ. Йывăç типсе пынă май, ик хĕрринчи электродсене йывăç çумнерех куçарса пыраççĕ. Ку мелпе типĕтнĕ чухне йывăç типĕтмелли пур технологи правилисене те пăхăнма пулать. Çакса хунă электрод пластинисем сывлăша ирĕккĕн çӳреме чармаççĕ. Йывăçа прокладка хурса купалама та пулать, çапла вара йывăç хушшине сывлăш çителĕклĕ таранах кĕрет, йывăç типĕтессине хăвăртлатать.

Ку мелпе типĕтес пулсан, камерăна та ытлашши кăткăс тума кирлĕ мар. Кун пек тăвас тесен, камерăна хăвагларах трансформатор лартмалла, [illegible] хумалла. Çапла тунă камера кăларăшĕпе тухăçлăрах усă курма, йывăçа проектпа палăртнă срокра типĕтме, типекен йывăç пахалăхне ӳстерме май панă пулĕччĕ.

Вĕри пăспа йывăç типĕтес ĕçе улăштарса çĕнетмелли мелсем нумай. Вĕсенчен хăшпĕрисене пурнăçлама тытăннăччĕ. Сăмахран, пĕр камеринче сывлăш çаврăнмалли вентиляци вырнаçтарнă. Пысăк расходсемсĕрех туса ирттернĕ çак ĕç усăллă пулчĕ. Ытти камерăсемпе танлаштарсан, ку камерăн ĕç тухăçлăхĕ 20—25 процент ӳсрĕ.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, йывăç типĕтес ĕç комбинатра юлса пырать. Ĕçе малашне те кун пекех хăварсан, производствăна йĕркелеме хĕн пулать.

Типĕтмелли камерăсенче кирлĕ режим тытса тăрас пулсан, калориферсем ăшăтакан сывлăша улăштарсах тăмалла. Усă курнă нӳрĕ сывлăша тула кăлармалли тата тулти атмосфера сывлăшне кĕртмелли каналсем те пур. Анчах ку каналсемпе темиçе çул ĕнтĕ цехра пачах усă курмаççĕ. Мĕншĕн тесен усă сывлăш кĕртмелли канала камерăран управлени коридорне кăларнă. Çавăнпа тулти атмосфера сывлăшĕ камерăна лекеймест. Сывлăш кĕртме е чарма лартнă шиберсем те (юпкăсем) ĕçлемеççĕ. Шалтан нӳрелнĕ сывлăша кăларса ямалли каналсем ялан ах усă тăраççĕ, шиберсемпе сайра хутра кăна усă кураççĕ. Çакăн пек, усă сывлăша кĕртсе, усă курнă сывлăша кăларса ярассине йĕркелемен пирки камерăсенче тĕрĕс режим тытса тăма май çук. Йывăç типесси хăй тĕллĕн пулса иртет. Рабочи режима кирлĕ пек йĕркелеме пултараймасть. Вăл камерăсене вырнаçтарса тухнă психрометр термометрĕ кăтартнисене кашни сехетре кĕрсе пăхса çырса илет те журнал çине çырса хурать. Вăл кашни сехетре 10—12 камерăна кĕрет, пĕр сменăра 80—96 хут хутлать.

Кунсăр пуçне, усă курнă сывлăша уçса кăларса ярас пулсан, 14 камерăна шибер уçма каллех шала кĕрес пулать. Кăштах шибера туртасшăн сушильщикăн каллех мунчаран та вĕри камерăна тумтирпе кĕрсе тухас пулать.

Çак йывăрлăхран тухма май çук-ши? Пур. Камерăсенчи шиберсене управлени коридорне кăна кăлармалла. 8 камерăран сывлăш кăларассине çакăн пек тунă та ĕнтĕ. Мĕншĕн-ха ыттисенне те ун пек тумалла мар? Психрометра сăнаса тăрассине те коридора кăлармалла.

Усă сывлăш кĕмелли тата усă курнă сывлăша кăларса ямалли каналсене хута ярсан тата пĕтĕм управление коридора кăларсан, рабочи камерăна вăхăтсăр уçса сивĕтмест тата, сывлăхне сиен кӳмесĕрех кирлĕ пек режим тытса тăрса, йывăç типĕтес ĕçе хăвăртлатать.

Тепĕр тĕслĕх. Халĕ камерăна йывăç купалакан бригадăсем материала ekладра вагонеткăсем çине тиеççĕ, унтан илсе пырсан, камера урайĕ çине купалаççĕ. Çапла вĕсем пĕр тунă ĕçех тепĕр хут вĕри çĕрте тăваççĕ. Кăларнă чухне каллех вагонетка çине тиемелле. Çак усăсăр ĕç йывăçа типĕтме кирлĕ чухлĕ вăхăта илет. Уйрăмах вак детальсене типĕтнĕ чухне ку ĕçе тума вăхăт нумай кирлĕ. Ку ĕçе хăвăртлатма май пур: типĕтме хатĕрлекен йывăçа складрах вагонеткăсем çине кирлĕ пек тиемелле те, камерăна вагонеткипех кĕртсе лартмалла. Çулĕсем те, вагонеткисем те пур. Мĕншĕн тумасçĕ-ха? Складран камерăна çитериччен тиенĕ детальсем ишĕлсе анма пултараççĕ имĕш! Çапла калаçа тĕлĕнтерет цех технорукĕ С. Васильев юлташ. Çав вăхăтрах вăл йывăç типĕтессине чарса тăнине [illegible] Комбинат [illegible] ларать. Кивĕ йышши пукан тума пăрахни темиçе уйăх çитет ĕнтĕ. Кивĕ пукан деталĕсем çĕнĕ йышши пукан тума юрăхсăр. Апла пулин те кивĕ пукан деталĕсем чылайăшĕ камерăна лекнĕ. Цехра контроль пулнă пулсан, паллах, усăсăр йывăç камерăна та лекместчĕ, усăсăр вырăн йышăнмастчĕ.

Цехра çитменлĕхсем татах та пур. Комбинат руководителĕсем вĕсене курмаççĕ мар, кураççĕ, анчах мĕн пуррипе çырлахса тăраççĕ.

Йывăç типĕтмелли цеха тĕпренех юсаса çĕнетмелле. Юсав ĕçĕ ăнăçлă пытăр тата производствăна тытса ан тăтăр тесен цеха юсама халех тытăнмалла. Çуллахи уйăхсенче йывăç детальсене сывлăшпа та типĕтме пулать, типĕтмелле те. Йывăç 20—25 процент таран типет, 10 процента çитерме вара йывăрах мар.

«Коммунизм ялавĕн» коллективлă корреспонденчĕ—комбинатри «Знамя стахановца» хаçат редакцийĕ.

Тырпул пухса кĕртме хатĕр

КАНАШ. Доронин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн членĕсем 1953 çулта кашни гектартан вăтам шутпа 95 пăтран кая мар тĕштырă туса илме обязательство йышăнчĕç.

Вăйлă ӳсе çитĕнекен тырăсене кĕске срокра, тăккаламасăр пухса кĕртес, государствăна обязательствăсем тăрăх срокчен парса татас ыйтăва колхоз правленинче, колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче тата вырăнти парторганизацин усă пухăвĕнче тĕплĕ сӳтсе явнă.

Колхозăн кăçал 654 гектар çинчен тырпул, вăл шутра 35 гектар çĕрулми, 7 гектар кантăр пухса кĕртмелле. Ку ĕçе колхозниксемпе колхозницăсем пурĕ тырпул пухас ĕçĕн чи ответлă тапхăрĕнче фермăсенче ĕçлекенсенчен, служащисенчен, канма килекенсенчен 72 çын хутшăнтарма палăртнă.

4 жнейкăна тĕплĕ юсаса хатĕрленĕ. Вĕсемпе кашни кун икĕ сменăпа ĕçлеме 16 лаша çирĕплетнĕ. Жнейкăсемпе вырас ĕçе ертсе пыма Игнатьевпа Михайлов коммунистсене хушнă. Кирлĕ чухлĕ çурла-çавасем хатĕрленĕ.

Жнейкăсемпе кашни кун 20 гектар, алăпа 19 гектар вырса 220 гектар ырашa 6 кун хушшинче, суртрисене 11 кунта вырса пухма палăртнă.

4 молотилка авăн çапма хатĕр, икĕ витнĕ итем юсанă. Молотилкăсемпе авăн çапас ĕçре И. Гурьев, А. Васильев, Г. Александров, А. Васильев колхозниксене ответлă пулма палăртнă.

84 ĕç лаши валли урапа тата ытти таврашсем хатĕрленĕ. Çапнă тырра турттарма шăналăксем, михĕсем çителĕклĕ.

Çапнă тырра государствăна пама пĕр автомашина, 13 лав уйăрнă. Ку ĕçе пурнăçлас тĕлĕшпе ятарлăса транспорт бригади тунă. Бригадăна ертсе пыма С. Кузьмин коммунистпа В. Кузьмин комсомолеца уйăрнă. Транспорт бригади «Заготзерно» складне кашни кун тырă турттарса, государствăна тырă памалли плана сентябрĕн 25-мĕшĕнче тултармалла.

Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра колхозниксем валли столовăй организацилессĕ. Пĕчĕк ачаллă хĕрарăмсем пурте ĕçе тухма пултарччăр тесе ача площадки тăваççĕ.

Культурăлла-массăлла ĕç планне те çирĕплетнĕ. План тăрăх уйăхра иккĕрен кая мар стена хаçачĕ, кашни икĕ кунтан боевой листоксем туса тăмалла. Бригадăсенче колхозниксем валли хушăра хаçат-журналсем вуласа паракансене те уйăр[illegible] [illegible] лекцисене докладсем туса панă.

Бригадăсем, колхозниксем вăйлă тырпула кĕске срокра, тăккаламасăр пухса кĕртме, государствăна срокчен парса татма хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илчĕç. Кашни гектартан 95 пăтран кая мар тĕштырă туса илессине çирĕп шанса тăраççĕ.

И. МУКШИН.

Выльăх-чĕрлĕх çурчĕсем тăвас ĕçе хăвăртлатмалла

ЙĔПРЕÇ. Районти «Большевик» колхоз членĕсем хăйсен пĕрлехи пухăвĕнче общественная вылăх-чĕрлĕх валли витесем тăвасси çинчен сӳтсе явреç. Колхозра 2 строительство бригади, 2 транспорт бригади тата саман кирпĕчĕ хатĕрлекен бригада тума йышăнчĕç. Пуху хыççăнах колхозра вылăх витисем тăвас ĕç сарăлса кайрĕ. Халĕ ĕнесем валли икĕ вите тăваççĕ. Саман кирпĕчĕ çапакансем икĕ-виçĕ кун хушшинче 3 пин кирпĕч тунă. Колхоз машинипе тата лашасемпе 60 кубометр йывăç, мăк кăларнă.

Фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилеме колхоз 22 лаша вăйлă двигатель илсе килнĕ. Ферма тавра карта тытса çавăрнă.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра та строительство ĕçĕсем ăнăçлă пыраççĕ. Кунта иртнĕ кунсенче сысна вити тата пăру вити туса лартнă.

Анчах районти чылай колхозсенче вылăх-чĕрлĕх çурчĕсем тăвас ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. «Трудовик», «Красный партизан», Киров ячĕпе, Димитров ячĕпе тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем строительство ĕçĕсене вăраха янă, строительство бригадисем йĕркеллĕ ĕçлемеççĕ, вĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăракан çук.

«Правда», «Гвардеец», X лет Октября» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем строительство ĕçĕсене пуçăнман та.

Колхозсене строительство ĕçĕсене вăхăтра тата лайăх тума пăта, витмелли тата сортлă тимĕр, бетон ĕçĕсем валли известь питĕ кирлĕ, анчах райпотребсоюз çак материалсене илсе килсе сутассине йĕркелемест.

Колхозсенчи общественная вылăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерес тесен вылăхсене хĕл касарма ăшă та пысăк витесем туса памалла. Колхоз руководителĕсемпе пуçламăш парторганизацисен çак ответлă ĕçе вăхăтра тума тăрăшмалла, колхозниксем хушшинче социализмла ăмăртăва пуçарса ямалла.

Н. ПАВЛОВ.
Г. РУСАНОВ.

Колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн

ССР Союзне 1951—1955 çулсенче аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче партин XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăхĕнчи ĕç тухăçлăхне пилĕк çул хушшинче 40 процент ӳстермелле тесе кăтартса хăварчĕ. Ялхуçалăхĕнче ĕç тухăçлăхне пĕрмаях ӳстерсе пыма колхозри ĕçе тĕрĕс организацилени, производствăра ĕç дисциплинине пĕрмаях çирĕплетсе пыни кирлĕ.

Колхозра мĕнпур ĕçе ялхуçалăх артелĕн Уставĕ тăрăх йĕркелесе пымалла. Ялхуçалăх артелĕн Уставне И. В. Сталин колхоз пурнăçĕн тĕп законĕ, тенĕ. И. В. Сталин ялхуçалăх артелĕн Уставне çавăн пек хаклани Уставăн политикăлла пысăк пĕлтерĕшне кăтартса парать. Хуçалăх, культура аталанăвне тăтăшах ӳстерсе пыма, артель хăйĕн хуçалăхне Устав хушнă пек йĕркелесе пыни кирлĕ. Колхоз хăйĕн членĕсен интересĕсене общественная хуçалăхăн интересĕсемпе тĕрĕс сыхăнтарса пырать, общественная интересне мала хурса, колхозниксен интересне çĕклеме пулăшать. Колхозри общественная пурлăх пĕр чарăнмасăр ӳссе пытăр тесен, чи малтан кашни колхозник общественная ĕçе таса чĕрепе туни, ĕçе тĕрĕс, Уставра кăтартса панă пек, йĕркелесе тăни кирлĕ. Ĕçе тĕрĕс йĕркелени чи малтан ĕçкунĕ хакĕ пысăк пултăр тесе тăрăшнипе, ĕçри обезличкăна пĕтерсе сдельщина йĕркипе, прогрессивлă нормăпа ĕçлемелле тăвассипе пĕлтерет.

Ĕçкунĕн хакĕ колхозăн общественная хуçалăхĕ мĕнле аталанса пынинчен килет: общественная хуçалăх тĕреклĕ пулсан, ĕçкунĕн хакĕ те пысăк, общественная хуçалăх аталанса, хутшăнса пымасть пулсан, çавăн пек колхозра ĕçкунĕн хакĕ те пĕчĕккĕ.

1946 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановленире СССР Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ колхозсем ĕçкунĕсем расходлас тĕлĕшпе пысăк йăнăшсем тунине кăтартса пачĕç. Унтан тата ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн 1947 çулхи февральти пленумĕ, ĕçкунĕсем расходлассинче йĕркесĕрлĕхе пĕтерме хушса колхозсене çулталăк пуçламăшĕнчех хуçалăх отраслĕсем тăрăх ĕçкунĕ расходламалли плансем йышăнма, колхозри ĕçсене пурне те уйрăм е групповой сдельщина йĕркипе организацилесе пыма сĕнчĕ. Ĕçе сдельщина йĕркипе организацилени производствăри ĕç тухăçлăхне кунтан-кун хăпартса пыма, ĕçе кĕске вăхăтра туса иртерме май парать. Ĕçе сдельщина йĕркипе организацилесен кашни колхозникăн е группăн ĕç хисепне тата унăн пахалăхне уйрăммăн шута илсе пырас пулать. Сдельщина йĕркипе ĕçлени колхозра ĕçшĕн тӳлессинче обезличкăпа уравниловкăна пĕтерме май парать.

Прогрессивлă норма йĕркипе ĕçлемелле туни ĕç тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăрать. Прогрессивлă норма колхоз производствинчи малта пыракансем тунă çитĕнӳсенчен туха тăрать. Анчах та хăшпĕр колхозсенче пĕрре йышăннă ĕç нормисене тунă çитĕнӳсене кура çийĕнчех тӳрлетни çукха, çăннипе прогрессивлă норма çине куçмалла тумаççĕ.

Ялхуçалăх специалисчĕсен, колхоз правленийĕсен ĕçшĕн хушса тӳлемелли çинчен калакан закона колхозниксене тĕплĕ ăнлантарса памалла. Ĕçшĕн хушса тӳлени ĕç тухăçлăхне хăпартма пулăшакан шанчăклă меслетсенчен пĕри пулса тăрать.

Ĕçе тĕрĕс йĕркелени хăйĕн паха результатне колхозниксем ĕç дисциплинине çирĕплетсе пырсан кăна парать. Ĕçре çирĕп дисциплина пулмасан, производствăри ӳсĕмсен хăвăртлăхне çĕклеме, çитĕнӳсем тума май çук. Ĕç дисциплинине хавшатнă колхозра малалла каяссине кĕтме çук, вăл аталанма пултараймасть. Çавăнпа ĕнтĕ ялхуçалăх артелĕн Уставĕнче пур колхозниксем те ĕç дисциплинине çирĕп тытса пыма тивĕçлĕ, тенĕ. Колхозри ĕç йĕркине, правилисене кашни колхозник яланах пурнăçа кĕртсе пымалла. Хăшпĕр колхозсенче çакна çителĕксĕр пурнăçлаççĕ. Ун пек колхозсене артель членĕсем хăйсен килĕнчи хуçалăхĕ çинчен ытларах шутлаççĕ, çапла вара колхоз производствин тĕп никĕсне хавшатаççĕ.

Парти, совет тата ялхуçалăх органĕсем колхозсенче производство ĕçне тĕрĕс йĕркелес ыйту çине сахалтарах пăхма пусланине пула, республикăри хăшпĕр колхозсенче ĕçкунĕсен минимумне тултарман вăйпитти колхозниксен хисепĕ ӳснĕ. Ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксен хисепĕ пысăккипе уйрăмах Первомайски районĕнчи колхозсем палăрса тăраççĕ. Ку районта 1952 çулта ĕçкунĕсен минимумне тултарман вăйпитти колхозниксен хисепĕ 41,4 процента çитиех ӳснĕ. Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Пăрачкав, Куславкка районĕсенчи колхозсенче те çавăн пек колхозниксен хисепĕ чылай йышлă пулнă.

Первомайски районĕнче ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксен хисепĕ 1952 çулта хăшпĕр колхозсенче 50 процентран та иртнĕ. Акă, илер, Хрущев ячĕпе тăракан колхоза. Кунта ĕçкунĕсен минимумне тултарман вăйпитти колхозниксен хисепĕ 50 процент, Жданов ячĕпе тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче 60 процент пулнă.

Чылай районсенче колхозсенчи ĕç дисциплинине çирĕплетсе пырасси çине тимлĕ пăхаççĕ. Ун пек районсенче ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксен хисепĕ чакса пырать. Çавăн пек районсен шутне Красноармейски, Элĕк, Çĕрпӳ, Советски районĕсем кĕреççĕ. Республикăри малта пыракан колхозсенче ĕçкунĕсен минимумне çулталăк хушшинче пур колхозниксем те тултараççĕ тата иртерсе тултараканнисем те нумай. Акă, тĕслĕхрен, Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозра, Красноармейски районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан тата «Путь Ленина» колхозсене илер. Ку колхозсенче ĕçкунĕсен минимумне тултарман вăйпитти колхозниксем çукпа пĕрех. Вăтамăн илсен, унта кашни вăйпитти колхозник çулталăк хушшинче 250—280 ĕçкунĕ тунă.

Колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1942 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче уйрăм постановлени йышăннă. Çав постановленире вăйпитти колхозниксен çулталăк хушшинче обязательнăй йĕркепе тултармалли ĕçкунĕсен минимумĕ пулмалла тенĕ. Çав постановленирех вăйпитти колхозниксем ялхуçалăх производствинче хăçан мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тумалли тапхăрсене те кăтартса панă. Ĕçкунĕсен минимумне пурнăçламалли пĕрремĕш тапхăрăн срокĕ июнĕн 15-мĕшĕнче тухрĕ. Çавна май парти, совет тата ялхуçалăх органĕсем умне пысăк задача тухса тăрать. Ялхуçалăх ĕçĕсен пĕрремĕш тапхăрĕнче ĕçкунĕсен минимумне мĕнле тултарни çинчен калакан итогсене тумалла. Икĕ эрне хушшинче пур колхозсенче те правлени ларăвĕсенче тата колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче 1953 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен пĕрремĕш тапхăрĕнчи ĕçкунĕсен минимумне мĕнле тултарни çинчен калакан итогсене пăхса тухса сӳтсе явмалла. Ку ларусене те, пухусене те ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксене чĕнмелле. Ĕç дисциплинине пăснипе вĕсем колхоза, хăйсене те сиен кӳни çинчен ăнлантарса парас пулать вĕсене, ӳкĕте кĕртме тăрăшас пулать. Ĕç дисциплинине, колхозри ĕç правилисене пăхăнман колхозниксем пирки ялхуçалăх артель Уставĕн 17-мĕш статьипе усă курса мерăсем йышăнни кирлĕ.

Çакна та паллă туса хăварас пулать: вăйпитти колхозниксем ĕçкунĕсен минимумне тултарманни чылай чухне колхозсенчи ĕç ресурсĕсемпе тĕрĕс усă курма пĕлменнинчен килет. Колхозсенчи ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курасси пирĕн халăх хуçалăх ыйтăвĕсем хушшинче паллă вырăн йышăнса тăрать. Колхозсен ĕç вăйĕпе тĕрĕс тата туллин усă курма пĕлнипе колхозсен общественная хуçалăхĕ аталанасси çыхăнса тăрать тата промышленность валли кирлĕ ĕç вăйне планра кăтартнă пек парса тăрасси те çавăнтан нумай килет. Пирĕн республикăри социализмла ялхуçалăхĕ малалла аталанса ӳссе пыма хăйне кирлĕ ĕç вăйĕ запасĕпе питĕ пуян. Çав ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курмалла, ĕç тухăçлăхне çĕнĕрен ӳстермелле, ялхуçалăх производствин культурине лайăхлатса пымалла.

Колхозра ĕç дисциплинине çирĕплетсе пырас тĕлĕшпе ялти коммунистсен, ялхуçалăхĕнчи стахановецсен ролĕ уйрăмах пысăк. Вĕсем колхоз производствинче кăтартуллă ĕçлесе, колхозниксен массине общественная хуçалăхри ĕçе таса чĕрепе, юратса ĕçлеме вĕрентеççĕ.

Пирĕн республикăри хăшпĕр колхозсенче артель членĕсем колхоз ĕçне çителĕксĕр хутшăнни, ĕçкунĕсен минимумне тултарманни çав колхозсем хăйсен общественная хуçалăхне пĕр енлĕ кăна аталаннинчен те килет. Хуçалăхри ĕçе лайăх йĕркелесе пырсан, колхозра ĕç дисциплини çирĕп пулсан, кашни колхозах хăйĕн мĕнпур ĕçĕсене хăй вăйĕпех вăхăтра туса пĕтерме пултарать. Ĕçе тĕрĕс йĕркелеме пĕлменнипе колхозра ĕç вăйĕ çитмен пек туйăнать, вара çав колхоз правленийĕ колхозри ĕçсене тума рабочисем аякран илет. Çакăн пек рабочисене тӳлеме колхоз укçа-тенкĕ те, продуктсем те нумай пĕтерет. Кун пек туни йăнăш пулать.

Кашни вăйпитти колхознике общественная хуçалăхра туллин, пĕтĕм вăйпа ĕçлеме услови туса парас пулать. Сталин юлташ çапла каланă: пур колхозниксем те, нумайăшĕ кăна мар, таса чĕрепе, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесен, колхозсенче продуктсем питĕ нумай пулĕç, тĕрлĕрен тупра та тем чухлех пулĕ, вара пирĕн Тăван çĕршыв тĕнчери чи пуян çĕршыв пулĕ.

А. СМИРНОВ,
агроном.

ГОСУДАРСТВĂНА—ÇĔРУЛМИ

СĔНТĔРВĂРРИ. Пĕрлешсе пысăклатнă «Молния» колхоз кăçал 111 гектар çине çĕрулми лартса плана ытлашшипех тултарчĕ. Лартнă хыççăн юлнă 12 тонна çĕрулмие 1953 çулшăн государствăна панă.

П. ГЕРАСИМОВ.

Итали парламенчĕн сессийĕ уçăлнă

РИМ, июнĕн 25-мĕшĕ (ТАСС). Паян суйлав иртнĕ хыççăн пирвайхи хут депутатсен палатипе сенатăн пĕрремĕш ларăвĕ уçăлнă. Депутатсен палатин председателĕ пулма христианла-демократа Джованни Гронкие суйланă. Вăл 504 сасăран 273 сасă илнĕ. Социалист Тарджатти 177 сасă, монархист Ковелли 29 сасă илнĕ. Сенат председателĕ пулма независимăй Чезаре Мердзагора суйланă. Ăна депутата христианла-демократла парти спискĕпе суйланă. Мердзагора 229 сасăран 132 сасă илнĕ. Депутата компарти спискĕ тăрăх суйланнă независимăй Молле 79 сасă, независимăй де Никола 10 сасă илнĕ.

Депутатсен палатипе сенат ларăвĕ умĕн парламентри мĕнпур партисен ушкăнĕсен канашлăвĕсем пулса иртнĕ. Компартин парламентри ушкăнĕн канашлăвĕнче Пальмиро Тольятти çапла каланă: июнĕн 7-мĕшĕнчи суйлавра çĕнтерни компарти çĕнтерĕвĕ кăна мар, чи малтан, демократипе халăх çĕнтерĕвĕ пулса тăрать. Эпир июнĕн 7-мĕшĕнче кĕрешсе илнĕ позицине тĕрĕс усă курсан, тенĕ Тольятти, демократи ĕçĕ тата чылай малалла кайма пултарать. Суйлавçăсем пире парламента мĕне те пулин улăштарас тесе, халăх пурнăçĕн условийĕсене улăштарас тесе, мирпе нациллĕ никама пăхăнманлăха хӳтĕлесе хăварас тесе суйласа янă. Эпир хамăр тивĕçе пурнăçлăпăр. Тольятти Данте Горрери депутата саламланă. Ăна икĕ кун каялла кăна, 5 çул хушши тĕрмере ларнă хыççăн, ирĕке кăларнă.

Коммунист-депутатсен депутатсен палатинчи ушкăнĕ хăйĕн председателĕ пулма Тольятти юлташа суйланă.

Коммунистсен сенатри ушкăнĕ хăйĕн председателĕ пулма Мауро Скоччимарро юлташа суйланă.

Социалистсен партийĕн парламентри ушкăнĕсем Пьетро Ненни председатель пулса ертсе пынипе канашлу иртнерĕ. Ненни хăйĕн сăмахĕнче социалист-депутатсен задачи «парламентра ытларахăш вăй туса хурассине пулăшасси» пулать, тенĕ.

Депутатсен палатинчи социалистсен ушкăнĕн председателĕ пулма Ненние суйланă.

МАРОККО КОМПАРТИЙĔН ГЕНЕРАЛЬНĂЙ СЕКРЕТАРЬНЕ ТĔРМЕРЕН КĂЛАРНА

ПАРИЖ, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Парижри аппеляци сучĕн следстви палати Мароккăри Коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарьне Али Ятана вăхăтлăха тĕрмерен кăлармалла тунă.

Али Ятана 1952 çулхи сентябрь уйăхĕнче тĕрмене лартнă. Икĕ уйăх иртнĕ хыççăн Касабланкăри аппеляци сучĕн следстви палати ăна вăхăтлăха тĕрмерен кăларма йышăннă. Анчах та, Парижри çар прокуратури çумĕнчи суд следователĕ Мишель ăна «государствăн тулашри хăрушсăрлăхĕ çине тапăннă» тесе айăпланă пирки, çак решение пурнăçа кĕртме май пулман.

Ĕнер каçхине «Френ» тĕрминчен тухнă хыççăн, Али Ята Парижра вĕренекен Марокко студенчĕсемпе, Францири Коммунистсен партийĕн, Францири республика çамрăкĕсен союзĕн тата ытти демократиллĕ организацисен представителĕсемпе тĕл пулнă.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессине ӳкерсе илнĕ документлă фильм

БУДАПЕШТ, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрири документлă хроникăллă фильмсем кăларакан фабрика Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕ çинчен фильм кăларнă. Унта сесси ларăвĕсене, ют çĕршывсенчен килнĕ хăнасене парламентра йышăннине, Кошута площадĕнче мире хӳтĕлес ятпа пулса иртнĕ митинга кăтартнă. Фильм «Пысăк шанăç çуралчĕ» ятлă.

Демократиллĕ Германи Республикинчи партипе правительство руководителĕсем ĕççыннисен пухăвĕсенче тухса калаççĕ

БЕРЛИН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Германи Республикинче пур çĕрте те тата Пысăк Берлинăн демократиллĕ секторĕнчи тĕрлĕ предприятисенче çак кунсенче Демократиллĕ Германи Республикин правительстви халăх пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе йышăннă ĕçсене сӳтсе явас ыйтупа производствăлла коллективсен пухăвĕсем пулса иртеççĕ.

Пухусенче Демократиллĕ Германи Республикинчи партипе правительствăн ответлă деятелĕсем тухса калаççĕ. Пухусем правительствăпа халăх пĕрлĕхлĕ пулнине кăтартаççĕ. Ĕççыннисем Демократиллĕ Германи Республикин правительстви республика халăхĕсемпе пĕтĕм нимĕç халăхĕн интересĕсемшĕн тăрăшса тытса пыракан çĕнĕ çул-йĕре чĕререн хапăл туса йышăнаççĕ, империалистла державăсен агенчĕсен мĕнпур тăшманла ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларма пулаççĕ.

Берлинра тухса тăракан демократиллĕ хаçатсем паян çакăн пек пухусем Демократиллĕ Германи Республики территорийĕнче чылай вырăнсенче пулса иртни çинчен пĕлтереççĕ.

Беленра (Лейпциг çывăхĕнче) О. Гротеволь ячĕпе тăракан комбинатри горняксен пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн председателĕ, Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министрĕ Отто Гротеволь сăмах тухса каланă. Унăн сăмахне митингра пулнисем пысăк тимлĕхпе итленĕ. Пухура пин рабочи ытла пулнă. Белен комбинатĕнче ĕçлекен рабочисен коллективĕ июнĕн 17-мĕшĕнче Берлинра тата Демократиллĕ Германи Республикинчи ытти хуласенче провокаторсем туса ирттернĕ ĕçе хутшăнман. Июнĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа çак предприятире ĕçлекен рабочисем хăйсен производствăлла заданийĕсене чылай ирттерсе тултараççĕ.

Отто Гротеволь партипе правительство юлашки вăхăтра йышăннă решенисемпе çыхăнса тăракан ыйтусем тăрăх тата ĕççыннисен ыйтăвĕсемпе интересĕсенчен тухса тăракан ыйтусем тăрăх ответсем панă. Пуху хыççăн О. Гротеволь чылай вăхăт хушши предприятире пулса рабочисемпе калаçнă.

Мерзебургри «Лина Верке» предприятийĕнче пулнă пухура Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министрĕн заместителĕ тата Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн генеральнăй секретарĕ В. Ульбрихт тухса калани итлеме 1.300 çын ытла рабочисем, служащисем, инженерсем, техниксем пуханнă.

В. Ульбрихт хăйĕн сăмахĕнче вăрçă чĕртекенсен агенчĕсем Берлинра тата Демократиллĕ Германи Республикинчи ытти чылай хуласенче туса иртернĕ фашистла авантюрăна тăрă шыв çине кăларнă. Фашистла провокацисем, тенĕ В. Ульбрихт, тата тепĕр хут рабочи класа унăн чăн-чăн тăшманĕсем кам пулнине кăтартса пачĕç. В. Ульбрихт ĕççыннисене вăрттăн ĕçлекен агентсене тытса пама чĕннĕ. Вăл рабочи класс партийĕ, ытти демократиллĕ партисем, правительствăпа пĕтĕм халăх хушшинче тачă çыхăну туса хума чĕннĕ. Çапла тунипе ĕççыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тата Германи пĕрлĕхне туса хурас тĕлĕшпе правительство йышăннă çĕнĕ çул-йĕре пурнăçлас çулпа шанчăклăн малалла пымалла.

Пухура тухса каланă рабочисемпе работницăсем тата интеллигенци представителĕсем июнĕн 17-мĕшĕнчи йĕркесĕрлĕхе организациленĕ ирсĕрсене сивленĕ, Демократиллĕ Германи Республикин правительствине чĕререн шанса тăни çинчен пĕлтернĕ.

Фридрихсхеймра (Берлин районĕ) çыхăну хатĕрĕсем тăвакан заводри рабочисен пухăвĕнче Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Демократиллĕ Германи Республикин правительстви йышăннă решенисем çинчен Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министр заместителĕ, Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн политбюро членĕ Генрих Рау, Карл Маркс ячĕпе тăракан вагонсем тăвакан заводри рабочисен пухăвĕнче (Потсдам-Бабельсберг районĕ) Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн политбюро кандидачĕ Е. Хоннекер, Берлинри станоксем тăвакан заводри рабочисен пухăвĕнче Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн членĕн кандидачĕ статс-секретарь В. Румпф, Берлинри электролампăсем тăвакан заводри ĕççыннисен пухăвĕнче Демократиллĕ Германи Республикинчи чугун çул транспорт министрĕ Р. Хвалек ăнлантарса панă.

Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн актив пухăвĕсем

БЕРЛИН, июнĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн мĕнпур организацийĕсенче — округсенче, хуласенче тата ялсенчи районсенче, çавăн пекех шултра промышленность предприятийĕсенче парти активĕн пухăвĕсем пулса иртеççĕ.

Ĕнер Лейпциг хулинче Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн хулари активĕн пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура 1.400 çын ытла пулнă.

Доклад тăрăх прение 16 çын тухса каланă. Тухса калакансем хăйсен сăмахĕсенче парти организацийĕсем хăйсен предприятийĕсене провокаторсенчен мĕнле хӳтĕлесе тăни çинчен каласа панă. Çакăнпа пĕрлех пухура пулнисем парти организацийĕсен ĕçĕсене критикленĕ, аялтан килекен критикăна çителĕксĕр сарнине, халăх хушшинче ăнлантару ĕçне çителĕксĕр туса пынине палăртнă.

Актив пухăвĕсем çавăн пекех тата Шверин, Нейбранденбург, Росток, Дрезден, Магдебург, Зуль, Потсдам округĕсенче тата ытти çĕрте те пулса иртнĕ. Пухусем ĕççыннисен анлă сийĕсем хушшинчи парти влиянийĕпе авторитетне малалла ӳстерессишĕн, парти дисциплинипе парти ăшĕнчи демократие малалла тĕреклетессишĕн, парти руководствипе парти членĕсем хушшинчи çыхăнăва тĕреклетессишĕн кĕрешĕве вăйлатас паллăпа пулса иртнĕ.

Парти активĕсен пухăвĕсенче партин ертсе пыракан деятелĕсем доклад тунă. Вĕсем конкретлă тĕслĕхсем тăрăх Берлинра пулса иртнĕ фашистла провокаци пĕлтерĕшĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса панă. Хĕвеланăç Германири тата Хĕвеланăç Берлинри вăрçă чĕртекенсем, Америка империалисчĕсем пулăшнипе, çĕнĕ вăрçă кăларма хăтланнине тăрă шыв çине кăларнă.

Провокаторсем вăрттăн ĕçлеме хăтланаççĕ

БЕРЛИН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Фашистла провокаторсен Демократиллĕ Германи Республикин халăхĕ хушшинче нимĕнле тĕрек те çук, çавăнпа та вĕсем вăрттăн ĕçе куçма хăтланаççĕ.

Тĕслĕхрен, Гер хулинчи пĕр предприяти çине тăшманла элементсем взрывчатка пăрахнă, тепĕр çĕрте вĕсем транспортерпа сортировочнăй установкăна стройран кăларма пăхнă. Çак диверсилле ĕçсене иккĕшĕнче те сийĕнчех сиссе пĕтерсе лартнă. Рабочисемпе служащисем сыхă пулнипе «ДЕФА» киностудийĕн копиисем ӳкерекен фабрикинче тăшманла диверсие сийĕнчех сирсе янă.

Тăшман агентури вăрттăн ĕçе куçса диверсисемпе провокацисем тума хăтланнине халăх татăклă отпор парать, вырăнти влаçсене тăшманăн сăтăрлă ĕçĕсене пĕтерсе лартма пулăшать.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июнĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян пичетлесе кăларнă сводкăра виçĕ çул хушши вăрçă пынă вăхăтра тăшман салтакĕсемпе офицерĕсем тата техника мĕн чухлĕ çухатни çинчен пĕлтернĕ.

ПХЕНЬЯН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ июнĕн 25-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕсем Кымхва районĕнче тата Юртон ялĕнчен икĕ километр кăнтăр-хĕвелтухăç енче тăшмана хирĕç оборонăра тăрса хаярrăн çапăçнă.

Ĕнер тăшманăн 60 самолечĕ Ненкван уездĕнчи Ненчон районĕ çине тискеррĕн тапăннă, пулеметсенчен пенĕ.

Самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

Совет кинофильмĕсен Вонсанри фестивалĕ

ПХЕНЬЯН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи ĕççыннисем совет кинофильмĕсене питĕ юратса пăхаççĕ. Корейăри тĕп телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Канвон провинцийĕнчи кинематографи управленийĕ çак кунсенче Вонсанра совет кинофильмĕсен виçĕ кунлăх фестивальне иртернĕ. Фестиваль вăхăтĕнче «Асран кайми 1919 çул», «Садко», «Пысăк концерт» фильмсем, çавăн пекех тата документла хроникăллă ултă фильм кăтартнă. Фестиваль пулса иртнĕ кинотеатра совет кинематографийĕ тунă çитĕнӳсене кăтартакан фотовыставка организациленĕ. Совет киноискусствин мастерĕсем çинчен калаçусемпе лекцисем иртернĕ. Фестиваль ăнăçлă иртнĕ. Кино курма геройла Вонсан хулипе çывăхри ялсенчен темиçе пин çын пынă.

Американецсен Индо-Китайри планĕсем

ПЕКИН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет.

Вьетнамран илнĕ пĕлтерӳре каланă тăрăх, Филиппинран Сайгона Америкăн Лăпкă океан районĕнчи çурран çарĕсен командующийĕ генерал-лейтенант Джон О'Даниэль ертсе пыракан çар миссийĕ пырса çитнĕ. Миссие Америкăн çурран çар, тинĕс-çар, сывлăш-çар вăйĕсен 9 офицерĕ тата государство департаменчĕн Кăнтăр-Хĕвелтухăç Ази енĕпе ĕçлекен управлени директорĕ Филипп Бонсал кĕреççĕ.

США-н Сайгонри посольстви пĕлтернĕ тăрăх, мисси Францин çар планĕсем пирки Франци влаçĕсемпе калаçу иртерес тĕллевпе килнĕ. Мисси членĕсем Индо-Китай çарĕсене вĕрентессине хăвăртлатма хушаççĕ, вăрçă пыракан районсене тухса çӳреççĕ. Мисси килсе çитни США Индо-Китайра агрессиллĕ ĕçсене хатĕрленессин вăйланнине кăтартать.

Сайгона пырса çитсен О'Даниэль çийĕнчех Бао Дай правительствин премьер-министрĕпе Нгуен Вен Тампа тĕл пулнă.

Çаксем пурте США-ри пуç пулса тăракан ушкăнсем «пулăшу» парас сăлтавпа Индо-Китайри виçĕ правительствăпа вĕсен çарĕсене хăйсен контрольне илме тăрăшни çинчен калаççĕ.

ФРАНЦИРИ ПРАВИТЕЛЬСТВО КРИЗИСĔ ПИРКИ

ПАРИЖ, июнĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян каçхине Жозеф Ланьэль («независимăйсем» текен чи сылтăм ушкăнрисен лидерĕсенчен пĕри.—Ред.) республика президентне правительство туса хурас ĕçе хăй çине илме пулса килĕшӳ панă.

Канашри учительски институтран кăçал вĕренсе тухакан юлташсем. Вĕсем Хабаровск крайне ĕçлеме каяççĕ.

Сулахайран сылтăмалла— Ж. Русина, В. Хнытченко, Л. Куляскина, Г. Строчук, А. Помазанова, Н. Цыганова тата Г. Кичасова.

П. КОЛЬЦОВ фотоӳкерчĕкĕ.

„Тăван Атăл" альманахăн 2 (47-мĕш) кĕнеки пичетленсе тухрĕ

Чăваш Совет писателĕсен союзĕ виçĕ уйăхра пĕрре кăларса тăракан «Тăван Атăл» альманахăн иккĕмĕш (хĕрĕх çиччĕмĕш) кĕнеки çак кунсенче пичетленсе тухрĕ. Кĕнекене подписчиксем патне ярса панă.

Альманахра çак произведенисем пичетленнĕ: Вс. Вишневский—Асран кайми 1919-мĕш (пьеса прологĕ, вырăсларан А. Кăлкан куçарнă), А. Эсхель — Виçĕ туй (комеди), тутар писателĕсен калавĕсем: Адель Кутуй — Премьера (Хветĕр Уяр куçарнă), Афзал Шамов—Миннур мучи (Н. Любимов куçарнă).

Поэзи пайĕнче: В. Алендей, Г. Лисин, И. Миронов, Н. Мартынов сăввисем. Тата тăванла халăхсен поэчĕсем — Украина поэчĕ Борислав Степанюк, Белоруссии поэчĕ Аркадий Кулешев, Латыш халăх поэчĕ Ян Судрабкалн çырнă сăвăсем пичетленнĕ. Çавăн пекех тата Польша поэчĕ Юлиан Тувим, Турци поэчĕ Назым Хикмет, нимĕç поэчĕ Иоганнес Бехер, Китай поэчĕ Эми Сяо сăввисем пичетленсе тухнă. Асăннă сăвăсене вырăсларан Чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкай куçарнă.

Истори пайĕнчи статьясем: В. Дмитриев — Чăваш хресченĕсене улпутсемпе чиновниксем хĕсĕрлени (XVIII-мĕш ĕмĕрĕн малтанхи çуррин материалсем тăрăх); П. Григорьев — Никита Яковлевич Бичурин (вилнĕренпе 100 çул çитнĕ май); В. Любимов — Столыпинла реакци тата революцин çĕнĕ çĕкленĕвĕ чăвашсем хушшинче (1908—1914 ç.ç.).

Критикăпа библиографи пайĕнче: А. Иванов — В. Маяковскин «Владимир Ильич Ленин» поэмине чăвашла куçарни çинчен.

ĔÇЕ МЕХАНИЗАЦИЛЕНĔ

ЕЛЧĔК. Çу заводĕнче йывăр ĕçсене механизациленĕ. Заводра дизель, генератор, электричество вăйĕпе ĕçлекен икĕ сепаратор пур. Çав сепараторсем сехетре 1.000 литр сĕтрен хăйма уйăрса илме пултараççĕ.

Нумаях пулмасть 1.400 литр кĕрекен çу уçлакан машина ĕçлеме тытăнчĕ.

А. СТЕПАНОВ.

ЧУЛ МĂЛАТУК ТУПНĂ

ЧКАЛОВСКИ. Хирте ĕçленĕ чухне Н. Табаков колхозник «Гвардеец» колхоз çĕрĕ çинче чул мăлатук тупнă. Мăлатука питĕ çирĕп чултан тунă, йывăрăшĕ 1 килограма яхăн.

Çак мăлатука колхозник Туçари вăтам шкул музейне панă.

В. ИВАНОВ.

Курсран вĕренсе тухрĕç

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Тĕмерти «Новая жизнь» колхозра виçĕ çуллăх агрозоотехника курсĕсем ĕçлерĕç. Агротехника курсне МТС участокри агрономĕ А. Никитин юлташ ертсе пычĕ. Çак кунсенче курсран 25 çын вĕренсе тухрĕ. Колхозниксем вĕренӳ программине лайăх пĕлнине, малта пыракан агротехника пĕлĕвĕсемпе тырпул пăхса ӳстерне çĕрте усă курма пултарнине кăтартса пачĕç.

А. Александров, В. Григорьев, В. Павлов, Н. Алексеев, П. Тимофеев, М. Уткин, А. Тихонов колхозниксем уйрăмах лайăх вĕренчĕç. Вĕсем экзаменсенче «5» паллăсем илчĕç.

Вĕренсе тухнисене ялхуçалăхĕнче уйхир енĕпе ĕçлекен 1-мĕш разрядри мастер ятне тата дипломсем памалла тунă.

А. ЖИРНОВ.

КОНЦЕРТ ПУЛЧĔ

СОВЕТСКИ. Çак кунсенче пирĕн районти колхозсенче Чăваш государство филармони артисчĕ Н. Самарин скрипач пулчĕ. Вăл «Дружба», Шверник ячĕпе, Свердлов ячĕпе тăракан колхозсенче пулса концертсем пачĕ. Колхозлă ял ĕçченĕсем концертсене пысăк хавасăхпа итлерĕç.

В. АНДРЕЕВ.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТРА

Умстатья — Рационализаципе изобретательство ĕçне вăйлатассишĕн куллен тăрăшмалла.

Республикăра çĕнĕ заем сарас ĕç ăнăçлă пулса пыни çинчен пĕлтернисем.

Г. Шабаев.— КПСС Уставĕ—парти пурнăçĕн тĕп законĕ.

А. Балашов.— Потребкооперации работникĕсен пысăк задачисем.

И. Яхваров.— «Гвардеец» колхоз примерĕпе.

Колхозсенче хăмла ӳстерессишĕн ытларах тăрăшмалла (хăмла ӳстерекен колхозсен председателĕсен, бригадирсен, звеньевойсен, ялхуçалăх органĕсен руководителĕсен, ялхуçалăх специалисчĕсемпе механизаторĕсен республикăри канашлăвĕнчен).

С. Харин.— Японири ĕççыннисем хăйсен прависемшĕн кĕрешеççĕ.

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — Кизел хулинчи драма театрĕн гастролĕсем. Июнĕн 27-мĕшĕнче «Олеся». Спектакль 20 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«РОДИНА»—июнĕн 27-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Два бойца». Ытти сеанссенче «Поют жаворонки».

«УДАРНИК» — июнĕн 27-мĕшĕнче «В дальнем плавании» (çĕнĕ копи).

Агроном канашĕ

Йĕтĕне пăхса ӳстересси

Пысăк тухăçлă тата паха йĕтĕн туса илес тесен, ăна лайăх пăхса ӳстермелле. Çумкурăксене шăтса тухнă-тухманах çумласа пырас пулать. Йĕтĕн пуссине çумкурăксенчен икĕ хутран кая мар тасатмалла. Сарлака ретпе вăрлăхлăх акнă çĕрте ретсем хушшине икĕ хутран кая мар кăпкалатса тухмалла. Çумкурăксене тымарĕ-мĕнĕпех тăпăлтарса кăлармалла. Çумланă чухне йĕтĕн калчи таптанса пĕтесрен сыхламалла. Çум çумлас ĕçе йĕтĕн чечеке ларас умĕн 10 кун маларах йăлтах пĕтермелле.

Йĕтĕн пуссинче сырлан курăкĕ ӳсме пуçлани палăрсан унти вырăнсенчи ӳсентăрана пĕтĕмпех çулса пăрахмалла, сырлан сарăлман участокри йĕтĕне те пĕр метра яхăн илсе çулмалла. Мĕн çулса пăрахнине çунтарса ямалла. Çулнă участока сухалакан сий тарăнăшех сухаламалла.

Калчана час-часах пăрçасем пысăк сиен кӳреççĕ. Вĕсем йĕтĕн тухăçлăхĕпе пахалăхне чакарма пултараççĕ. Йĕтĕн пăрçине пĕтерме гектар пуçне 10—15 килограмм 7 процентлă дуст-гексохлоран е 10—15 килограмм 5 процентлă ДДТ препарат, е 10 килограмм кремнефтористăй натри сапмалла. Ку ĕçе ирхине, сывлăм çук чухне тата çанталăк лăпкă вăхăтра туса иртермелле. Эмелсене сапнă хыççăн çумăр çусан, вĕсене тепĕр хут сапмалла. Пăрçасене пĕтерме çыпăçакан япаласем — патока, урапа маçĕ тата ытти çавнашкал япаласем сĕрнĕ флажоксемпе, сачоксемпе тата ытти хатĕрсемпе те усă курмалла.

Йĕтĕне хăвăрт аталанма азотлă удобренисемпе ытларах апат памалла. Çак ĕçе тунă чухне йĕтĕн пуссинче ун умĕн мĕнле тырпул пулнине, акас умĕн мĕнле удобренисем тата вĕсене мĕн чухлĕ кăларнине, тăпра ӳрĕлĕхĕ мĕнлине шута илни кирлĕ. Йĕтĕн калчисем ерипен ӳсни вĕсен тунисемпе çулçисем сарăрах пулни азот çитменнине кăтартса параççĕ. Çавăн пек калчасене азотлă удобренисем гектар пуçне çакăн чухлĕ памалла: аммиак селитри 60—75 килограмм, аммони сульфачĕ 100—120 килограмм, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 6—8 центнер. Кайăк кĕшĕк тислĕкĕпе апат пама чи малтан йĕтĕне сарлака ретпе акнă çĕрте усă курас пулать, мĕншĕн тесен ăна ретсем хушшисене кăпкалатса çемçетнĕ чухне тăпрапа хутăштарма çăмăл.

Акиччен пусса фосфорлă удобренисем кăларман е сахал кăларнă тата тăпрара нӳрĕ çителĕклĕ пулсан, калчасем 10—15 сантиметр тăршшĕ ӳссе çитĕнмен вăхăтра йĕтĕне суперфосфатпа апат пани усăллă. Ăна кашни гектар çине 1,5—2 центнер сапмалла. Фосфорлă удобренисем йĕтĕн пулса çитессине хăвăртлатаççĕ, унăн сӳсне тата вăррине лайăхлатаççĕ.

Йĕтĕн вăйлă аталанать тата вăл симĕсхурарах пулсан, ăна азотлă удобренисемпе апат пама кирлĕ мар. Ун пек участоксем валли калиллĕ удобренисем кирлĕ. Кашни гектар пуçне хлорлă кали 60—80 килограмм, кĕл 6—8 центнер сапмалла. Калиллĕ удобренисем сӳс пулма тата унăн пахалăхне аванлатма пулăшаççĕ. Вĕсене пула йĕтĕн сахал выртать, унăн вăрри ытларах тухать.

Йĕтĕне малтан çумкурăксене пĕрремĕш хут çумласа пăрахсан, калча вăрăмĕш 6—10 сантиметр чухне апат параççĕ. Ун хыççăн калча мĕнле аталаннине кура суйласа илсе апат памалла. Юлашки хут апат парассине йĕтĕн чечеке лариччен туса иртермелле. Вăрлăхлăх хăваракан участоксене йĕтĕн чечекĕ чăмăртаниччен е чăмăртаннă вăхăтра калиллĕ удобренисемпе апат пани питĕ усăллă. Иккĕмĕш е виççĕмĕш хут апат пама удобренисен виçине малтанхи пекех илмелле.

Калча вĕтеленсе каяссинчен сыхланма йĕтĕне сывлăм типсен апат памалла. Апат пама удобренисене лайăх вĕтетмелле, пусă тăрăх вĕсене пĕр тикĕс сапса тухмалла.

Йĕтĕне çулла пăхса çитĕнтернĕ вăхăтра совка-гамма ятлă лĕпĕш хурчĕ вăхăтран вăхăта тухнине манма юрамасть. Вăл йĕтĕн туса илес ĕçре пысăк сиен кӳрет. Пĕрремĕш хут çуралнă лĕпĕш хурчĕсем июнĕн пĕрремĕш пайĕнче вĕçме тытăнаççĕ, иккĕмĕш хутĕнчисем — июлĕн вĕçĕнче тата август уйăхĕнче. Асăннă лĕпĕш ами 500 çăмарта таран хывма пултарать. Çав сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсемпе кĕрешме вĕсем çăмарта тунă вăхăтра çăмăлтарах. Калчана çумкурăксенчен вăхăтра çумласа тăмалла, ытти вырăнсенчи çумкурăксене çавапа çулса пăрахмалла. Силос тума юрăхсăр пулсан, çумкурăксене çунтармалла. Совка-гамма лĕпĕш хурчĕсем вырăнтан вырăна куçаççĕ. Вĕсене чарса лартма пысăк мар каналсем тумалла, хуртсене тытма вĕсен тĕпĕнче шăтăксем алтмалла.

Совка-гамма лĕпĕш хурчĕсене пĕтерме гексохлоранпа, ДДТ препаратпа, кремнефтористăй натрипе те усă кураççĕ. Малтанхи икĕ имçама гектар пуçне 10—15-шер килограмм, кремнефтористăй натрие 12 килограмм сапаççĕ.

Тăван çĕршыва йĕтĕн нумай кирлĕ. Йĕтĕн акса тăвакан районсемпе колхозсен тивĕçĕ государствăна паха йĕтĕн нумай парасси пулать. Пысăк тухăçлă йĕтĕн туса илесси ăна çулла тивĕçлипе пăхса çитĕнтернинчен нумай килет. Ку тĕлĕшпе агротехникăлла пур ĕçсене те тимлĕн пурнăçлассишĕн кĕрешмелле.

Агроном М. ЯКИМОВ.

ШУПАШКАРТИ ТАТА РЕСПУБЛИКĂРИ ЭКРАНСЕМ ÇИНЧЕ

„У САМОГО СИНЕГО МОРЯ"

ятлă илемлĕ çĕнĕ фильм кăтартма пуçлаççĕ.

Сценари авторĕ — К. Минц. Композитор — С. Потоцкий.

Рольсене выляакан артистсем:

Мария — К. Кузьмина, Юсуф — Л. Свердлин, Алеша — И. Крючков.

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

«Союзпичет» уйрăмĕсенче, кашни почтăра хаçат çыrăнса илме пулать. Письмоносецсем граждансен килĕсенче, хаçат-журнал сарма уйăрнă çынсем — фабрикăсемпе заводсенче, учрежденисенче, шкулсенче, колхозсенче тата МТС-сенче хаçат илсе тăма çырăнтараççĕ.

ХАÇАТ ХАКĔ:

1 çулталăка—52 тенкĕ те 20 пус;
6 уйăха —26 тенкĕ те 10 пус;
3 уйăха —13 тенкĕ те 5 пус;
1 уйăха — 4 тенкĕ те 35 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01433 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.